Пĕчĕк ачасен кун-çулне... макăрнине илтес килменнипе татаççĕ • 3 стр.

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

30(900) №, 2015, çурла/август, 1

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

ÇĂЛТĂР ÇŮПÇИ

Пурнăç тути пĕтсен...

Александр ВАСИЛЬЕВ, юрăç

Ялсенче тăтăшах пулма тивет. Улшăнчĕ чăваш ялĕ, эх, улшăнчĕ! Çĕнетӳ тапхăрĕ пĕтерчĕ те чăваша, халĕ те тăна кĕрсе урăлса пĕтеймест вăл. Арçынсем пирки-ха сăмахăм. Çĕршыв тăруках урăх çулпа аталанма пуçласан çухалса кайрĕç вĕсем. Вăйсăрланчĕç. Пурнăç тутине çухатрĕç. Вулакан çав тапхăра лайăх астăвать пулĕ: хĕрарăмсем мăн сумкăсем сĕтĕрсе пасара çӳреме пуçларĕç. Ырăран мар, паллах, ачипăчине ӳстермелле-çке-ха. Арçынсем вара çав вăхăтра хваттерĕсенче усракан пĕчĕк йыттисене çавăтса урама уçăлма илсе тухатчĕç... Анчах йытăпа утса та йăлăхтарать. Пĕчĕккĕнех черкке енне сулăнчĕ чăваш. Ахальтен каламаççĕ "ĕç тытса тăрать çынна" тесе. Çакăн йышши пĕлтерӳсем те çухалнăччĕ çав тапхăрта. Ĕççĕр аптранипе ирех пĕр ушкăна пухăнать 7-8 арçын. Тепĕр кун та – çак ӳкерчĕкех... Шел те, халĕ çамрăксем те çак çулпах "аталанаççĕ".

Калаçтарать çак ыйту. Ăна мĕнле те пулин татса пама, лару-тăрăва улăштарма пулать-и? Ара, каплах пулсан арçын пачах пĕтет вĕт. Халĕ те вăл хĕрарăма ача çуратма кăна кирлĕ пулса тухать. Упăшкисене ĕçнĕшĕн, ĕçлеменшĕн килтен кăларса ярасси вăй илсе пырать чăваш хĕрарăмĕ хушшинче. Нумайăшĕ хĕрарăма хăйнех айăплама пăхать. Вăл, халĕ те çемьене, хуçалăха пĕччен тенĕ пек туртса пыраканскер, айăплă-мĕн арçын ĕçке ярăннăшăн... Лайăх арăм тĕлне лекнисем йĕркене кĕнисем те пурха арçынсен хушшинче. Анчах хĕрарăм та халĕ çепĕçлĕхне, ачашлăхне çухатса арçынна çаврăнса пырать, унран кая мар туртать, ĕçет. Кун пек арăм упăшкине мĕнпе хавхалантарма пултартăр? Çапах та хĕрарăмра эпир, арçынсем, ачашлăхпа çепĕçлĕхсĕр пуçне тутлă апатпа сăйланине те, илемлĕ те çыпăçуллă çипуç тăхăннине те хаклатпăр вĕт.

Ĕмĕр вăрăм мар. Пурнăç ăнманшăн кам айăплине шыраса вăхăт ирттериччен ăна йĕркелесе яма тăрăшни аванрах-тăр. Арçынпа хĕрарăмăн пĕр-пĕриншĕн тĕкĕ пулмалла. Йывăрлăхсене пĕрле парăнтарма çăмăлрах.

ÇАНТАЛĂК

	кăнтăрла	çĕрле
1.08	+19	+16
2.08	+21	+15
3.08	+21	+16
4.08	+21	+16
5.08	+18	+15
6.08	+17	+15
7.08	+16	+13

• Руль умĕнчи хĕрарăм пулчĕ-кайрĕ... хам арăм 2 стр.
• Арçынсен хăйсен курăкĕ пур 5 стр.
• Ĕмĕре тăсакан çимĕçсем 8 стр.
• Пир тĕртекенрен – министр таран 11 стр.

4 стр.

О.РОМАНОВА коллажĕ

Патшалăх пулăшăвĕ – яла аталанма

Федерацин "Ялăн социаллă аталанăвĕ" программипе килĕшӳллĕн ялхуçалăх специалисчĕсене пайăррăн пулăшасси 2003 çултанпа йăлана кĕнĕ. Икĕ çул каялла унăн ячĕ улшăнчĕ те "Ял территорийĕсене 2014-2017 çулсенче тата 2020 çулчченхи тапхăрта аталантарасси" тĕллевлĕ программа пурнăçланма тытăнчĕ. Улшăнусем те пулчĕç. Сăмахран, ытти çулсенче патшалăх ял çынни çурт-йĕр тума е туянма тăкакланнă пурлăхăн 45 процентне субсиди мелĕпе саплаштарнă тăк, халĕ ку пулăшу 70 процентпа танлашать. Курăмлă çăмăллăх темелле. Калăпăр, тăватă çынран тăракан çемье 950 пин тенкĕ таран тивĕçет. Паллах, çирĕп услови те пур – специалистсен ялта сахалтан та 5 çул ĕçлемелле.

Яла аталантарассипе çыхăннă программа республикăра еплерех пурнăçланнине ЧР ялхуçалăх министрĕн çумĕ Николай Якимов каласа кăтартрĕ.

Хисеплĕ вулакансем!
"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн
июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен
ЙӲНĔ ХАКПА!
"ХЫПАР" – 625,62 тенкĕ
/кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йӳнĕрех/
"Хыпар"-эрнекун – 325,92 тенкĕ
/19,62 тенкĕ йӳнĕрех/
"ЧĂВАШ ХĔРАРĂМНЕ" 343,8 тенкĕпе çырăнтараççĕ

АЯКРИ ТĂВАН

Хаçат вулассиi камăн ĕçĕ?

Хĕрарăм шăпи упăшкаран та нумай килет. Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Садки ялĕнче пурăнакан Елизавета Улюкина мăшăрĕ япăх пулнă темест, анчах пурнăçĕнче пĕр çирĕп утăм тума тивнĕ унăн: вăл вунултă çул пĕрле пурăннă хыççăн тăвата ачине – ывăлĕпе висĕ хĕрне – çаватса килĕнчен тухса тарнă.

– Мăшăрăм ман хыççăн килессе пĕлнĕ эпĕ. Ялта пурăнма чăрмантаракан нумайăнччĕ: тем те пĕр сăмахлатчĕç, пирĕн хушша кĕретчĕç. Упăшка та ĕçме пуçларĕ. Кун пек пурнăçран тăвăнса çитнĕччĕ эпĕ. Аякра вара çĕннине пуçларăмăр. Ун чухне çĕршывра лару-тăру лайăхчĕ: хăть те хăш вырăна çитсе кĕрсен те ĕç паратчĕç, пурăнмалли вырăнпа тивĕçтеретчĕç.

Эпĕ яланах фермăра тăрăшнă, ĕне сăвакан вара пур çĕрте те кирлĕ. Упăшка та ĕççĕр ларман. Вырăн шыраса таçта та çитрĕмĕр, ачасемпе пайтах куçса çӳрерĕмĕр. 1985 çулта вара Садкинче тĕплентĕмĕр. Мăшăр тивĕçлĕ канăва тухиччен тракториста тăрăшрĕ. Кабина алăкĕ хĕстернипе çурăм шăммине хуçса сусăрланчĕ. 51 çул пĕрле пурăннă хыççăн упăшкасăр тăрса юлтăм, чĕлĕм туртса ӳпкине пĕтерчĕ те усал шыçса пула çĕре кĕчĕ, – тет чăваш хĕрарăмĕ.

Елизавета Георгиевна Шăмăршă районĕнчи Пăчăрлă Пашьелĕнче çуралнă. Çут тĕнчене 1940 çулта килнĕскер вăрçă вăхăтĕнчи нушана астумасть. Ашшĕ те пулнă унăн. Арçын çапăçусенчен пĕринче урасăр юлнăран 1942 çулта тăван килне таврăннă.

– Çĕнтерĕве лайăх астăватăп. Аттепе пĕртăван Санька аппа та вăрçăра пулнă. Вăл сывă таврăнчĕ. Урамра пире, ачасене, курсан йăтса илчĕ те кашнинех канфет пачĕ. Унччен ку çимĕçе астивсе те курман эпĕ.

Атте вăрçăран таврăнсан сахăр кăларакансен бригадинче ĕçлерĕ. Çемьере сакăр ачаччĕ пирĕн. Эпĕ – асли. Ялти ытти ачасем пекех эпир те ĕçлесе ӳснĕ. Анчах пирĕнпе асанне пурăнни пысăк çăмăллăхчĕ.

Манăн вĕренес кăмăл та пурччĕ. Шăллăмсемпе йăмăксем пурте аслă е вăтам пĕлӳллĕ пулчĕç. Мана вара атте ямарĕ. "Эсĕ асли – килте кирлĕ", – терĕ те çакăнпа калаçу вĕçленчĕ. Ĕмĕрĕме ферма ĕнисене сусах ирттертĕм, – аса илет çамрăклăхне Елизавета Георгиевна.

Хăйĕн ачисене вара тивĕçлĕ пĕлӳ пама тăрăшнă хĕрарăм, çавăнпах тăваттăшĕ те ятарлă пĕлӳ илнĕ. Амăшне савăнтараççĕ вĕсем, пулăшсах тăраççĕ. Пĕр-пĕр пысăк ĕç тума та хăвăртах пухăнаççĕ.

Чăх-чĕп те усрать-ха Лисук аппа. Хаçат-журнал та нумай вулать.

– Çамрăклах вулама юрататтăм. Çавăнпах тĕрлĕ кăларăм çырăнатăп. Упăшка вăрçатчĕ вара: "Хаçат вулассиi хĕрарăм мар, арçын ĕçĕ вăл", – тетчĕ. Пурпĕр парăнмастăм. Паян та вулатăп. Куç курманнипе те асапланмастăп, – вĕçлет калаçăва Елизавета Улюкина.

Елена ЛЯНКИНА.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

«Руль умĕнчи хĕрарăм пулчĕ иккен ман арăм»

Ялта пурăнаканăн утă уйăхĕнче ĕç мăй таранах пулин те Шупашкар районĕнчи Сархурăн хастарĕсем кӳршĕ-аршăпа пĕрле пухăнса савăнма та вăхăт тупаççĕ. Ялти чи ăста та пултарулла хĕрарăм-водителе тупса палăртас тĕллевпе «Автоледи» конкурс ирттересси те кунта ырă йăлана кĕрсе пырать.

– Халĕ ялти хĕрарăмсем те руль умне ларма кăмăллаççĕ, хăюллисем пĕр тăхтамасăрах водитель курсĕсене çырăнаççĕ. Çавăнпах çуллен çак конкурса хутшăнакансен йышĕ те ӳссех пырать. Кăçал акă 13-мĕшĕ хăйсене тĕрĕслесе пăхма кăмăл турĕ. Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн йĕркине пăхăнмаллине аса илтерни нихăçан та ытлашши пулас çук. Уява хутшăнакансем çакна аван ăнланаççĕ, – каласа кăтартрĕ ялти клубра 15 çул культура мероприятийĕсем йĕркелесе ирттерекен Наталия Пулькова.

Хастар хĕрарăмсем «тимĕр урхамахĕсене» еплерех юратни вĕсен машинисене курсанах сисĕнет. Тĕрлĕ хăюпа, хăмпăпа капăрлатнăскерсем туя кайма тухнă тейĕн. Чи малтанах кашни хăйĕнпе тата чун кăмăлланă шанчăклă тăрантасĕпе паллаштарчĕ. Çул çинчи чăрмавсене парăнтарассипе, çĕлен евĕр кукăр-макăр авкаланса ярăнассипе пĕр-пĕрне маххă памарĕç вĕсем. Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн йĕркине лайăх пĕлнине çирĕплетрĕç, транспорта гаража тĕрĕстĕкел кĕртсе лартма пултарнине кăтартрĕç. Мĕншĕн шăпах çак техникăна суйласа илнине палăртса, чун киленĕç урхамахне мухтаса сăвă çырасси те шăл çемми-мĕн Сархурăнсемшĕн. «Руль умĕнчи хĕрарăм» паллăна та кашни хăйне май кăсăк та илĕртӳллĕ ӳкерсе хатĕрлерĕ.

Конкурсантсене хавхалантарма пухăннисем валли те тĕрлĕ вăйă хатĕрленĕ Наталия Михайловна. Шăккалат кунĕнче çак çимĕçе астивмесĕр епле чăтайăн-ха? Çавăнпах «Пылак мăшăр» конкурсра вăй виçекен те йышлă пулчĕ. Ачасем вара асфальт çине хăйсен ĕмĕтĕнчи машинине пурăпа сăнларĕç.

Атайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Виноградов çак кун çул-йĕр автоинспекторĕн ятарлă çи-пуçне тăхăнсах конкурса хакларĕ. Çăмăлах мар ку ĕçре ăна инçе çула çӳресе палăрнă Александр Яковлев пулăшрĕ. Конкурса хутшăннă чи пысăк стажлă водитель Екатерина Смирнова хăй руль умĕнче 11 çул ахальтен ларманнине халăх умĕнче те çирĕплетрĕ: правурăхпа палăрса «Султалăк автоледийĕ» титула, ятарлă кубока, ылтăн медале çĕнсе илчĕ. Тĕрĕссипе, Смирновсем ку конкурса çемйипех хутшăнчĕç. Катя машинăпа мала тухса тĕлĕнтерчĕ. Шӳтлеме юратакан упăшки Алексей çулталăкри хĕрне ача кӳмине тĕксе ăмăртрĕ, куракансене савăнтарнăшăн ăна та парнепе хавхалантарчĕç. «Руль умĕнчи хĕрарăм пулчĕ иккен ман арăм», – çапла такмакласа йăл кулă парнелерĕ телейлĕ кил хуçи. Пьедестал çине Александра Павловăпа Елена Михайлова та хăпарма тивĕçрĕç. Чи çамрăк водитель Анастасия Пулькова та 6 уйăхрах ăсталăх пухма ĕлкĕрнине ĕнентерчĕ. Ытти конкурсанта та тивĕçлĕ номинацире хакласа парнесемпе чысларĕç.

Лина МАКАРОВА.

ЧУН КИЛЕНĔÇĔ

Çулсем шыв юххи пек шăваççĕ

Элĕк районĕнчи Исванкă ялĕнче пурăнакан Раиса Тимофеевна нумаях пулмасть «Пурнăç çулĕ такăр мар» кĕнекипе паллаштарчĕ.

– Çырасси мĕнрен пуçланчĕ?

– Тивĕçлĕ канăва тухсан çĕнĕ чун йăпанăвĕ тупăнчĕ – сăвă çырма пуçларăм. Пушă вăхăт нумайланнăранши е шалтан тем хистенĕрен-ши рифмăсем шăрçалама пикентĕм. Пĕрремĕш сăвă 1997 çулта калăпланчĕ. Ăна «Элĕк-Шупашкар» ят патăм, сывăх çынсен умĕнче вуларăм. Вĕсем манăн ĕçе пысăк хак пачĕç. Малашне те çырма сĕнчĕç. Ырă сăмах хавхалану хушрĕ. Йĕркесенче иртнине аса илетĕп, паянхи пурнăçа та сăнлатăп.

2005 çулта «Сăвă пуххи» пичетленсе тухрĕ, пилĕк çултан «Çутă ĕмĕт» кĕнеке кун çути курчĕ. 2011 çулта «Пурнăç çулĕ такăр мар» кăларма май килчĕ.

– Хушма ят – Сарплат. Ăна ăçтан тупрăр?

– Исванкă ялне ĕлĕк Сарплат тенĕ. Çавăнпах çак ята илтĕм.

– Ачалăхри вăхăтсене лайăх астăватăр пулĕ?

– Эпĕ 1939 çулхи кăрлач уйăхĕн 13-мĕшĕнче çуралнă. Ĕçлемесĕр пурăнман, пайтах пилĕк авма тивнĕ. Сĕтел çине çăкăр кăларса хурсан чунчĕререн савăннă. Уй-хирте çĕрĕпе çĕрулми пуçтарнине паянхи кун та манаймастăп. Аттене вăрçа илсе кайсан анне çичĕ ачипе тăрса юлчĕ. Вăл пире çирĕп тытнă, ирĕкленме паман, тĕрĕс çул-йĕр çине тухма пулăшнă. Вăтам шкул пĕтерсен Вăрнара кайрăм, вылăх тухтăрне вĕренме пуçларăм, анчах çемьене йывăр лекнĕрен яла таврăнма тиврĕ. Элĕкри «Çăлкуç» ача садне ĕçе вырнаçрăм. 1963 çулта ялти Вениамин Семеновпа çемье çавăртăмăр. Пилĕк хĕре кун çути парнелерĕмĕр. Вĕсем халĕ пурте пурнăç çулĕ çине тухнă.

Çулсем шыв юххи пек малалла шăваççĕ. Районти тĕп больницăра завхозра, буфетчицăра, санитаркăра вăй хутăм, хыççăн хуçалăхри бригадирта ĕçлерĕм. 1989 çулта тивĕçлĕ канăва тухрăм, «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçрĕм.

– Сăввусене вулакан патне епле çитеретĕн?

– Тĕрлĕ уявра усă кураççĕ вĕсемпе, тĕлпулусене чĕнсен те нихăçан хирĕçлеместĕп, хаваспах хутшăнатăп.

– «Пурнăç çулĕ такăр мар» кĕнекене сăнӳкерчĕксемпе те илемлетнĕ.

– Сăнӳкерчĕксенче – аттепе анне, пиччепе шăллăм, йăмăксем, çавăн пекех ял çыннисем, сывăх тăвансем, юлташсем.

Пытармастăп, паян та сăвă çырас килет. Çынна ватлăхра та киленĕç кирлине çулсем иртнĕçемĕн питех те аван ăнлантăм.

Юрий КОРНИЛОВ.
Элĕк районĕ.

Тăванăм, вулаканăм!

Аса илтеретпĕр – юратнă кăларăма çитес уйăхран илсе тăмалла та çырăнмашкăн пулать. Калăпăр, эсир ĕç нумайăшне пула – çулла уйрăмах – халĕ "Чăваш хĕрарăмне" илсе тăмастăр. Кӳршĕсем вара кăçса кайса вулаççĕ, çапла-и? Вĕсенчен юлас мар тесессĕн августăн 25-мĕшĕччен почтальонпа тĕл пулăр та хаçата çырăнăр. Çапла вара сентябрь уйăхĕнчен пуçласа эсир та юратнă кăларăма тепĕр хут вулама пултаратăр.

Яланах пирĕнпе пулăр!

СУЙЛАВ

Иккĕмĕш тапхăр пуçланать

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тата вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен ертӳçисемпе депутачĕсен суйлавĕн пĕрремĕш тапхăрĕ – суйлава хутшăнма ирĕк паракан документсене пухасси, вĕсене тишкересси тата кандидатсене регистрацилесси – вĕçленчĕ.

Авăнăн 13-мĕшĕнчи суйлав бюллетеньне 5 кандидатăн хушаматне кĕртĕç. Вĕсем – Михаил Игнатьев, Валентин Шурчанов, Олег Николаев, Константин Субботин тата Валерий Сапожников. Комисси ыттисене, çиччĕшне, регистрацилемен. Сăлтавĕ: алă пуснине çителĕклĕ пухман, документсенчи йăнăшсем, хутсене тĕп комиссие вăхăтра çитермен тата ытти те.

Пĕрлехи сасăлав кунĕнче суйлав республикăри 317 муниципалитет йĕркеленĕвĕнче иртĕ, вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен 3746 депутатне суйĕç.

Ял тăрăхĕн пуçлăхне мандат илнĕ депутатсем хăйсен хушшинчен, конкурс комиссийĕ сĕннĕ çынна, çирĕплетĕç. Кун пек улшăнăва ял тăрăхĕсен уставне кĕртнĕ ĕнтĕ. Вăл ял тăрăхĕн администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлĕ, ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн председательне урăх депутата суйĕç.

ЧР тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Александр Цветков калашле, суйлав çинчен кашни çын лайăх пĕлтĕр, унăн сасăлава хутшăнма кăмăл пултăр, суйлав кунĕнче алла бюллетень илтĕр.

/Хамăр инф./.

СПОРТ

Шупашкар çăлтăрсене кĕтет

Çурла уйăхĕн 3-5-мĕшĕсенче Шупашкарта çăмăл атлетикăпа Раççей чемпионачĕ иртет. Вăл çĕршыври паллă спортсменсене пухĕ. Чăваш Ене Екатерина Конева /виççĕлле сикет/, Мария Кучина, Светлана Школина тата Даниил Цыплаков /çӳллĕшне сикеççĕ/, Денис Кудрявцев /400 метра хӳме урлă чупать/, Анжелика Сидорова /шăчăпа сикет/ тата спортăн ытти çăлтăрĕсем килĕç. Ăмăртăва Олимп чемпионĕсем те хутшăнĕç – çӳллĕшне Иван Уховпа Анна Чичерова та сикĕç.

Шупашкарăн çăмăл атлетика енĕпе Раççей çеç мар, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене ирттерме те опыт пур ĕнтĕ. Юлашки ултă çулта тĕп хуламăр нацин тĕп стартне тăваттăмĕш хутчен /2009, 2011, 2012 тата 2015 çулсем/ йышăнать. Нумаях пулмасть çăмăл атлетика командисен Европа чемпионачĕн чи çӳллĕ лигинчи ăмăртăвĕсене те Шупашкарта куртăмăр. Ăна тĕнче шайĕнчи специалистсем пысăк хак пачĕç.

Раççей чемпионачĕсене ирттерни те чăвашсем çăмăл атлетикăна кăсăкланнине палăртать. Ахальтен мар ăна курма халăх йышлă пухăнать.

Ăмăртусен кунĕнче спорт королевине кăмăллакансене сахал мар парне кĕтет. Спортсменсемшĕн кашни кăмăл тăвакан "чирлеме" пултарать – "Олимпийский" стадиона укçасăрах кĕртеççĕ. Спортсменсем пурĕ наградăсен 38 комплектне салатĕç. Куракансене кăмăллă пултăр тесе финалсене каçхи кӳлĕм ирттерĕç.

Ăмăртусем çурлан 3-мĕшĕнче – 10.00 – 11.30 тата 16.45 – 21.00 сехетре; çурлан 4-мĕшĕнче – 9.30 – 12.45 тата 15.25 – 20.00 сехетре; çурлан 5-мĕшĕнче – 14.20 – 18.50 сехетре иртĕç. Официаллă майпа чемпионата тунтикун 16.00 сехетре уçĕç.

Чăваш Ен команди ăмăртусене хутшăнма хатĕр. Республикăри çăмăл атлетика командин тĕп тренерĕ Николай Панфилов пĕлтернĕ тăрăх, ăмăртусене 21 спортсмен хутшăнĕ. Вĕсен йышĕнче Раççей пĕрлештернĕ командине кĕрекен маттурсем – шăчăпа сикекен Анжелика Сидорова, 5000 метра чупакан Елена Наговицина, чăрмавлă 3000 метра чупакан Людмила Ремеслова, сăнă ывăтакан Вера Ребрик – пур.

Пурне те ăнăçу сунатпăр! "Олимпийский" стадионта тĕл пуличчен!

Татьяна НАУМОВА.

АЙĂПЛАВ

Мухмăр каснăран...

Вăрмар район сучĕ нумаях пулмасть Тăвай районĕнче пурăнакан С.Шумский тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă. 56-ри арçынна ют киле кĕрсе вăрланăшăн айăпланă.

Мухмăрпа аптăранă арçын кăçалхи çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче эрех туянма хăйĕн укça пулманран кӳршисене çаратма, вăрланă япаласене сутса тунă мулпа хаяррине туянма тĕв тунă. Çак тĕллевпех вăл иккĕмĕш хутри чӳрече умне чикмек лартнă, кантăка чулпа çĕмĕрсе шала кĕнĕ. Укçа тупайман вăл, кофе ĕçмелли 5 куркапа сĕт ямалли савăтне çеç йăтса тухнă. Кӳршисен килĕнче хаклăрах япаласем – телевизор тата ытти техника – пулнă-ха, анчах савăт-сапана хăвăртрах сутма май пуррине тавçăрнă вăл. Пысăккисене илсе тухма та ансат мар-çке.

Вăрланă япаласене арçын тӳрех тепĕр кӳрши патне йăтса пынă, вĕсемшĕн 150 тенкĕ ыйтнă. Анчах хĕрарăм килĕшмен. Кун хыççăн арçын унран кивçен ыйтнă, савăт тултарнă хутаçне вăхăтлăх упрама хурса хăварнă.

Кăштахран çĕмĕрĕлнĕ кантăка асăрханă ял халăхĕ полицие шăнкăравланă. Çак ĕçе Шумский тунине тӳрех тавçăрнă. Ара, арçын судпа халиччен те пĕрре мар айăпланнă, çав шутра – вăрланăшăн та.

Арçын хăйĕн айăпне тӳрех йышăннă, ĕç-пуçа тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартнă. Çак утăма тума мухмăр чĕртме хăйĕн укçа çукки хистенине те пытарман.

Вăрланă япаласене хакланă хыççăн вĕсем 500 тенкĕ тăнине палăртнă.

Айăпланакан уголовлă ĕçе уйрăм йĕркепе пăхса тухма ыйтнă. Шар курни те хирĕçлемен. Кун пек чухне айăплав вăхăчĕ самай чакать. Апла пулин те Шумские 1,5 çуллăха условлă майпа айăпланă.

Приговор вăя кĕмен-ха.

О.ЯСТРЕБОВА,
Тăвай район прокурорĕ.

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

Ача тетте мар, ăна ӳстерме çăмăл мар

Татьяна НАУМОВА

"Хура хыпарсемпе" паллашатăп. Кашнине вуламассерен кĕлетке тăрăх сивĕ чупать. Мĕн тери хаяр эпир – çынсем. Пурнăçа ним чухлĕ те хаклама пĕлместпĕр...

Вăрнар районĕнчи 33 çулти арçын пĕлĕшĕн пĕчĕк хĕрĕн кунçулне татнă. Пĕлтĕрхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче хайхисем хĕрарăм хваттерĕнче эрех ĕçнĕ. Кил хуçи тантăшне ăсатма тухсан арçын унăн çулталăкри хĕрне урама илсе тухнă та асфальт çине пуçĕпе темиçе хутчен сула-сула çапнă. Йывăр сурансене пула пĕчĕкскер часах сывлама та чарăннă. Арçынна вăл йĕни килĕшмен имĕш.

Тепĕр тискерлĕхĕн сăлтавĕ те шăпăрлан куççульленнипех çыхăннă. Шупашкарта пурăнакан 35-ри арçынна та пĕрле пурăнакан хĕрарăмăн икĕ уйăхри ачине вĕлернишĕн тата тепĕр хĕрне хĕненĕшĕн айăплаççĕ. Ĕç-пуç пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче тара илсе пурăнакан хваттерте пулса иртнĕ. Следстви палăртнă тăрăх, арçын икĕ уйăхри пепкене уринчен ярса илнĕ те лешĕ макăрнине чăтаймасăр ăна кутăн тытса вырăн айккине стенана темиçе хутчен çапнă. Пепкен виллине амăшĕ ирхине çеç асăрханă. Следстви пынă вăхăтра арçын маларах иккĕри хĕрачана хĕнени те палăрнă.

Ача чухне çак арçынсем хăйсем йĕмен-шим? Хырăмĕ выççине е йĕмми йĕпеннине амăшне шăпах сасă парса систермен-шим? Урамра выляна май такăнса урине ыраттарсан чи çывăх çыннин чĕрçи çинче ларса ачашланман-шим? Вĕсенче çынлăх туйăмĕ мĕншĕн вăранайман-ши? Юрату çитменши? Е эрех-сăра ухмаха кăларнă-и? Шуйттан ернĕ пулинех. Пин-пин ыйту çуралать.

Çак арçынсем ют ачана юратма, пепкене кăкăрĕ çумне чăмăртаса ăпăлантарма ăс-хал çитереймен тейĕпĕр. Çав вăхăтрах чунсăр амăшĕсем те сахал мар-çке. Варта тĕвĕленнĕ чуна кун çути памасни пирки мар, çуратнисене шелсĕррĕн çӳп-çап купине кайса ывăтакансем, çĕр ăшне чавса чикекенсем, хăйсене ĕçме-çиме чăрмантарнăранах хĕнекенсем, пăрахса хăваракансем çинчен сăмахăм.

Юрать усаллипе юнашар лайăххи те пур. Ют ачасене хăйсеннинчен те ытларах ачашлăхпа çепĕçлĕх, юрату парнелесе ӳстерекенсем те пурри савăнтарать.

Çапах паян ырри мар, усалли çинчен сăмах хускатас килет. Ачасемпе ĕçлекенсен хушшинче те чунсăрсем пурри – общество инкекĕ. Ачасене, тен, пĕремĕкпе çеç воспитани пани çителĕксĕр пулĕ. Анчах пур енĕпе те виçерен иртмелле мар. Çак чикке уйăрайманнисем те сахал мар-çке. Воспитательсен хушшинче те пур вĕсем.

Нумаях пулмасть Шупашкар районĕнчи суд пĕр участокĕ асăннă районти ача садĕнче тăрăшакан 48 çулти хĕрарăм тĕлĕшĕпе приговор йышăннă. 2011 çултан пуçласа кĕçĕннисемпе ĕçлекенскер кăçалхи нарăс уйăхĕнче айăпа кĕнĕ. 4 çулти сусăр ача асăрханаймасăр теприн аллине хĕстернĕ. Хĕрарăм çаканшăн ачана кутĕнчен темиçе хутчен вăйпах çапнă, çурăмĕнчен тĕкнĕ. Арçын ача урайне хырăмĕпе ӳкнĕ. Юрать-ха хĕрарăма ĕçтешĕсем чарнă.

РФ СК республикăри управленийĕ шута илнĕ тăрăх, кăçалхи çур çулта çеç тĕрлĕ преступление пула çулталăка çитмен – 9, 1 çултан пуçласа 14 çулччен – 49, 14 çултан пуçласа 17 çулччен 30 çамрăк шар курнă. Право хуралĕн ытти органĕсенчен следовательсем патне çул çитмен 88 ачапа çыхăннă 108 уголовлă ĕç çитнĕ.

Республикăра ачасемпе çыхăннă çул çинчи инкексен шучĕ ӳснине те каламалла. Шута илнĕ 142 тĕслĕхрен тăваттăшĕнче çул çитменнисем вилмеллех аманнă. Ачасем ытларах аслисен тимсĕрлĕхне пула инкеке лекеççĕ.

Утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче те реанимацие илсе çитернĕ çулталăкри арçын ача çăмăл автомашинăн хыçалти ларкăчĕ çинче çывăрса пынă. Ашшĕ-амăшĕ ятарлă кресло çине лартман ăна.

Çак эрнере тунтикун 5-ри арçын ача реанимацие лекнишĕн те аслисемех айăплă. Ашшĕ çулăн машинăсем хирĕç килекен енне тухнă та... хăй вырăнтах вилнĕ. Мăшăрĕ йывăр аманнă.

Çав кунах Муркаш районĕнче 14-ри хĕрача велосипедпа аслă çулпа пынăран больницăна лекнĕ...

Асăрханулăха çухатнăранах пурнăç хыççăн пурнăç татăлать. Хаярлăхпа пĕрлех шыв та, вут та шеллемест.

Путакан та нумай пулчĕ кăçал. Утă уйăхĕн 24-мĕшĕ тĕлне республикăра 24 çын путса вилнĕ. Вĕсенчен улттăшĕ – каллех ачасем. Хальхинче те аслисем пăхса çитерейменнипе темелле.

...Çапла, тепĕр чухне ачан кашни утăмне асăрхаса ĕлкĕрме май çук. Ӳкес вырăн ăçтине пĕлменрех тӳшек те сараймастпăр. Чунсăр этемсен хаярлăхне ырăпа çĕнтерме май тупаймасан та тимлĕхе çухатас марччĕ. Ача тетте мар, ăна ӳстересси те вăйă кăна мар.

ÇАМРĂКЛĂХ

Патшалăх пулăшăвĕ – яла аталанма

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

– Юлашки вăхăтра яла таврăнакансен йышĕ ӳсни палăрать. Хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм тăван тăрăхрах пурăнма тĕв туни аслисемшĕн те кăмăллă. Çамрăксене вăй илсе кайма, тымар яма, паллах, пулăшу кирлĕ. Патшалăх политики шăпах çакăн пек тĕллевлĕ те.

2003 çултанпа федерацин "Ялăн социаллă аталанăвĕ" тата "Ял территорийĕсене 2014–2017 çулсенче тата 2020 çулчченхи тапхăрта аталантарасси" тĕллевлĕ программăсене пурнăçа кĕртнĕ май пурнăçлакан мероприятисем валли республикăна федераци хыснинчен 1,5 млрд тенкĕ çитнĕ, – пĕлтерчĕ Николай Петрович.

Программăсем хута кайнăранпа республикăри районсенче пурăнса ĕçлекенсен çурт-йĕр ыйтăвне çăмăллатма федераци бюджетĕнчен – 844, республика – 420 млн тенкĕ яхăн уйăрнă. Çак тапхăрта ялти тăватă пин ытла çемье хăйсене ятăн кĕтеслĕ пулса тăнă. Вĕсенчен 1600-шĕ – çамрăк çемьесемпе специалистсем.

Программăна 35 çула çитеймен специалистсемпе çамрăк çемьесем хутшăнма пултараççĕ. Вĕсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черетре тăмалла, хваттер е çурт хакĕн 30 процентне тӳлеме пултармалла.

– Черетре тăракан сахал мар. Çамрăксем ялта тĕпленсен вĕсене патшалăх пулăшасса ăнланчĕç. Çавăнпах çак çăмăллăхпа усă куракансен шучĕ ӳссех пырать. Кăçал ялта пурăнакан 179 çемье субсидие тивĕçнине çирĕплетекен свидетельство илчĕ. Вĕсенчен 121-шĕ – çамрăк çемье тата специалист.

Ку вăл çав тери анлă программа иккенне палăртмалла. Унпа килĕшӳллĕн ялсенче комплекслă майпа çурт-йĕр çавăрма тата тирпей-илем кĕртме май пур. Хальлĕхе республикăра икĕ проект пурнăçланать. Пĕри – Патăрьел районĕнчи Шăнкăртамра, тепри – Шупашкар районĕнчи Опукасси ялĕнче. Патшалăх пулăшнипе газ, шыв, çутă кĕртеççĕ, каяш юхмалли пăрăхсем хураççĕ, çул сараççĕ. Комплекслă çак ĕçсене вĕçлесен 230 çемье хăйне кĕтеслĕ пулĕ, – палăртрĕ ялхуçалăх министрĕн çумĕ.

Программа çулсерен çĕнелет. Унта тăтăшах çĕнĕ проектсем хушаççĕ. Çĕнĕлĕхсен йышне халĕ çаксене кĕртмелле: мал ĕмĕтлисене грант парса хавхалантараççĕ. Унпа виçĕ енлĕн усă курма юрать: спорт тата ача-пăча лапамĕсене хăтлăх кĕртесси, историпе культура палăкĕсене упраса-çĕнетсе хăварасси, халăх промыслине, йăли-йĕркине пулăшу кӳресси.

Çак пулăшупа усă курсах 2014 çулта Чăваш Енре икĕ проект пурнăçа кĕчĕ: Шупашкар районĕнчи Кӳкеçре Бичурин сачĕн музей-паркĕ, Етĕрне районĕнчи Тури Ачакра "Хресчен çурчĕ" халăх музейĕ ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсене патшалăх 2,5 млн тенкĕ парса хавхалантарнă.

– Кăçал тата 2 проект хута каймалла. Элĕк тата Муркаш районĕсенче спорт лапамĕсем халăха савăнтарĕç, – пĕлтерчĕ Николай Якимов.

Татьяна НАУМОВА.

ÇУРАЛНĂ КĔТЕС

«Автансем те авăтаççĕ пуль, чăхсем те какалаççĕ пуль»

"Хура вăрман варринче пурăнакан пĕр чăвашăн виçĕ ывăл пулнă. Аслине Шураç тесе чĕннĕ, вăталăххине Упи, кĕçĕннине Ури. Чăваш йăлипе аслă ывăлне чĕнсе илет те ашшĕ, йытă хыççăн утма калать: "Ăçта çитсе çăвăрлать – эсĕ та çавăнта кил-çурт çавăр!" Çапла ырă сунса çуралнă килĕнчен сĕм вăрмана кăларса ярать.

Чылай утать Шураç йытă хыççăн. Лешĕ аранах пĕр вырăнта йăва çавăрать. Шураç та çавăнтах вăрман касса кил-çурт майлаштарать. Çакăнтан пуçланса каять Шураç ялĕ. Ĕмĕрсем иртсен те çынсем ял ятне улăштармаççĕ. Шураç – тĕне кĕмен чăваш арçыннин ячĕ.

Иккĕмĕш ывăлĕ те çак мелпех уйăрлса тухать, виççĕмĕшĕ те. Çапла вара Элĕк районĕнчи Шураç, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Упукушкăнь тата Урикасси ялĕсем пĕр тăвансенчен йĕркеленсе кайнă.

Çак халапа чăн тесе йышăнсан асăннă ĕçсем пирĕн тăрăхран Иван ĕмпӳ çарĕ иртсе кайиччен пĕр 50 çул маларах, 1500 çулсенче, пулса иртме пултарнă".

• ЯЛ ВАРРИ ÇАК ВЫРĂНТА ПУЛНĂ.

Çапла каласа кăтартать çуралнă кĕтесĕмĕн историйĕ çинчен "Савнă ялăм ман Шураç" кĕнеке /авторĕсем Алексей Фадеев тата Рита Арти/. Ял историне 100-140 çул каялла çуралнă-пурăннă ватăсен аса илĕвĕсем тăрăх çырнă. Вĕсем вара хăйсен аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ каласа кăтартнисене пĕлтернĕ.

Анчах та мĕншĕн йытă хыççăн кăларса янă-ха ывăлĕсене чăваш? Çак чĕрчунăн сисĕмлĕхĕпе усă курма тĕв тунă иккен вăл. Йытă, çăвăрлас умĕн, йăва çавăрма пур енчен те юрăхлă вырăн шыранă. Улах та пулмалла унăн, типĕ те, унпа пĕрлех сывлăш юхăмĕ пур енчен те пĕр пек килмелле. Улах та лăпкă кĕтес – çурисене лайăх аталанма. Типĕ вырăнта вĕсем ытлашши чирлемĕç. Пур енче те пĕр пек килекен сывлăш юхăмĕ вара çывхаракан тăшман шăршине аякранах илсе çитерĕ. Ĕçмелли шыв та çывăхрах пулмалла.

Этеме те вăрман варринче, паллах, шăпах çакăн пек вырăн юрăхлă. Унсăр пуçне ăна тырă-пулă çитĕнтерме меллĕ çĕр те кирлĕ пулнă.

Çапла ăнлантарать паян йытă тыткаларăшне çутçанталăк пулăмĕсене çутатакан ăслăлăх журналĕ. Ăслă чăваш вара çакна авалах пĕлнĕ.

Хура-шур, инкеклĕ кунсем çын пурнăçĕнче кăна мар, ял шăпинче те пулаççĕ. Шураçăн та синкере сахал мар чăтса иртерме тивнĕ. Патша салтакĕсене, лешсем ытла та алхаснăран, хĕрарăмсене пусмăрланăран, хирĕç тăнăшăн, пуç янишĕн хутне кĕнĕшĕн Шураçа тĕпĕ-йĕрĕпе çунтарнă. Ял пуçне хура юпа ларттарнă. Тĕнче тăрăх саланнă çынсем. Темиçе ĕмĕртен пурпĕр çуралнă кĕтесех таврăннă Шураççем. "Маçаксемпе мамаксен çĕрĕ" тесе каллех кунтах çуртсем çĕкленĕ. Шураçра каллех пурнăç аталаннă. Вăрă-хурах тапăннă улпута вилĕмрен хăтарнă хыççăн лешĕ Шураç пуçĕнчи юпана кăларса пеме хушнă, ял çыннисене ирĕк панă. Çакăн хыççăн халăх лăштах сывласа янă. Шăпах ирĕклĕ пурнăç ирĕклĕ аталанма май панă курăнать Шураççене. Кĕрнеклĕ пулнă пирĕн ял çыннисем. Çӳллĕ те капмар кĕлеткисемпе таврара палăрса тăнă. Вăрăм Михал, Вăрăм Тинеки, Вăрăм Элекçи, Вăрăм Тихăн, Măн Павăл, Măн Çимун, Вăрăм Якур, Вăрăм Пăркухви, Вăрăм Майкка текен ятсем пушă вырăнта çуралман паллах.

Чăваш çĕрĕ вилме те, пуйма та памасть теççĕ. Пирĕн тăрăхра чăнах та çĕр пахалăхĕ чаплах мар. Çавăнпах-тăр Шураççем алă ĕçне аталантарнă. Ентешĕмсен пултарулăхĕ пирки тавра пĕлет. Йĕке çавăрас енĕпе Шураççене çитекен çуках. Каярахпа станоксем те ăсталама пуçланă вĕсем. Кăçатă та йăвалланă. Çĕвĕçсем те, тимĕрçĕсем те хамăрăнах пулнă. Çил арманĕсем вансан вĕсене юсама та ют çĕре пулăшу ыйтма кайман. Улпут ирĕке кăларнă хыççăн тинех ял халăхĕ: "Эпир – Шураççем!" тесе калама вăтанма пăрахнă.

Мĕншĕн çыратăп-ха çак йĕркесене? Юлашки çулсенче ялсем пушанса, çамрăксем пурте хулана тарса пыни пирки калаçаççĕ. Пирĕн ялта лару-тăру урăхларах. Чăн, пĕрлешӳллĕ хуçалăх арканчĕ. Пачах урăхла пурнăç пуçланчĕ. Халĕ чăвашăн хăйĕн пуçне шухăшлаттарса ĕçлеме тивет. Шураç – пысăк ял мар, пурĕ те 100 ытла хуçалăх кăна. Апла пулин те аталанать-ха вăл, пурăнать. Пĕр-пĕринпе ăмăртса кермен пек кирпĕч çуртсем çĕклеççĕ ял çыннисем. Паян Шураçра 167 çын пурăнать. Ача сасси те илтĕнет ялта – çакă лайăх. Шкул сукмакне 35-ĕн такăрлатаççĕ, чи пĕччĕккисем 7-ĕн вĕсене ăмсанса пăхаççĕ – пурин те хăвăртрах ӳсес килет-çке. Аслă ăру çыннисем – 60. Чи асли – Нина Шленская, ĕмĕр тăршшĕпех шкулта кĕçĕн классене вĕрентнĕ. Нина Николаевна 90 çула çывхарать. Хисеплĕ ватă хыççăн 12-ĕн хăвалаççĕ – пурте 80-ран иртнĕ. Ялта нумай ачаллă çемьесем те пур: Лаврентьевсем, Герасимовсем, Васильевсем, Степановсем. Малтанхи икĕ çемьере 4-шар ача ӳсет. Паллах, çамрăк ăрăва ура çине тăратма çăмăл мар. Çакăншăн аслисем ырмиканми ĕçлеççĕ. Нумай ачаллисем ял-йышра ырă ятлă пулнинe палăртма кăмăллă.

Шураçра пултаруллă та ĕçчен çамрăк нумай. Сергей Лаврентьев Элĕк салинче стройорганизаци директорĕнче вăй хурать. Вăл тăрăшнипех ял тепĕр урамĕн çулне хытă сийпе витме май килчĕ. Юрий Лаврентьев, Юрий Порфирьев, Леонид Николаев, Юрий Герасимов – паянхи Шураçăн чăн тĕрекĕ. Çамрăксем тăрăшнипе ялта çăва таврашне йăлт тасатса тирпейлерĕç. Чи кирли, унти кивелнĕ çурт вырăнне çĕннине çĕклерĕç. Пархатарлă ку ĕçре Николай Ильин платнике уйрăмах ырăпа палăртас килет.

Ĕçлеме ӳркенмест паянхи çамрăк. Ĕçе техникăпа усă курса çăмăллатасси анлă сарăлнă – паян мотоблок туянман çын çук та пуль. Шураççен килĕсенче халĕ тракторсем те, груз турттармалли машинăсем те пур. Ирсерен ялтан çăмăл машинăсем пĕрин хыççăн тепри васканине курсан чун савăнать – пурин те ĕçе вăхăтра çитмелле-çке.

Ĕçлеме кăна мар, канма та пĕлеççĕ Шураççем. Ял клубĕ çумĕнче йĕркеленĕ "Хавас" ушкăн, ăна Нина Тарасова ертсе пырать, кирек мĕнле уявра та халăха юрă-ташăпа савăнтарать.

Тăван тăрăхран хакли çук теççĕ. Сывлăш та сипетлĕрех туйăнать кунта. Çуралнă кĕтес илемĕпе тыткăнлать. Ахальтен мар Шураç çинчен çакăн пек халап çӳрет. 1918 çулта ялта пуçламăш шкул уçăлнă. Малалла çамрăксем Хутарта ăс пухнă. Ун хыççăн вĕренме Етĕрнене, Нурăса, Шупашкара каймалла пулнă. 1911-20 çулсенче пулса иртнĕ теççĕ ку. Çурла уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн ялти пилĕк ача кутамкка çакса Етĕрнене вĕренме кайма тухнă. Вăрăм ĕшнене хăпараççĕ те ял енне çаврăнаççĕ хайхисем. Çӳллĕ вырăнтан йăлт курăнать. Анкартисенчи тырă капанĕсем çумĕнчи йĕтем çинче хĕрӳ ĕç пырать. Авăн аштаракан лашасем тулхăрни, çапуççи тăпачисем шакăлтатни уççăнах илтĕнет. Çыннисем калаçаççĕ-кулаççĕ... Тепĕр енчи çаралса юлнă уйри хăмăл çинче хĕртсе пăхакан хĕвел айĕнче кĕтӳ кĕшĕлтетсе çӳрет. Хăрăк шанкă хуçалнă пек шаплатса кĕтӳç пушши сас парать. Кĕтмен çĕртен ачасене тунсăх пусса илет. Вĕсенчен пĕри ял еннелле пăхса: "Эх, пирĕн килте автансем те авăтаççĕ пуль!" – тет. Тепри: "Чăххисем те какалаççĕ пуль!" – тет. Виççĕмĕшĕ шухăшласа тăрать-тăрать те: "Çук, эпĕ вĕренме пымастăп", – тесе çаврăнса килнелле утать. "Эпĕ те Шураçран ниçта та каймастăп!" – тесе тепри те юлташĕ хыççăн васкать. Çакăн хыççăн виçĕ çамрăк çеç Етĕрне çулĕ тăрăх пуçĕсене чиксе утаççĕ. Каярахпа виççĕшĕ те рабфак пĕтерсе инженер специальноçне алла илеççĕ, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче вăй хураççĕ. Çапла пирĕн ялта "автансем авăтаççĕ пуль", "чăхсем те какалаççĕ пуль" тени "эпĕ ялтан ниçта та каймастăп" тенине пĕлтерет.

Виктория ГЕРАСИМОВА,
Тавăтри вăтам шкул вĕренекенĕ.

ÇЫН-ТĂК ÇЫН

Купăсне тăсса ярать те...

Канаш тăрăхĕнче ăна пĕлмен çын çук та пулĕ. Ара, тăван районта иртнĕ "Раççей çăлкуçĕсем" фестивальре те Надежда Бабкинăпа пĕрле юрăсем шăрантарнă вăл. Çăлтăр чăваш арне тӳрех килĕштернĕ, унпа пĕрле сцена çинче кăмăлтанах саркаланса ташланă.

Çĕнĕ Шуртанра пурăнакан Виталий Дмитриевăн калаçнă чухне те алли-ури тăпăртатса кăна тăрать те, халăх умне тухсан тытса чарайăн-ши? Хуткупăсне тăсса ярсан халиччен ташă картине тăрса курманни те тĕпĕртетме пуçлĕ. Регионсен хушшинче иртекен Ираида Вдовина ячĕллĕ фестивальре икĕ çул каялла "Чи лайăх баянист" ята тивĕçнĕ вăл. Хисеп хучĕсен шучĕ те çук. Таврарисем пултарулăхĕнчен çеç мар, ăçтан вăхăт тупнинчен, унăн иксĕлми вăйĕнчен тĕлĕнеççĕ. Виталий Дмитриев – Вăтакас Татмăшри культура çурчĕн пуçлăхĕ. Çав вăхăтрах ку ялти вăтам шкулта "Укăлча" фольклор ушкăнне ертсе пырать вăл. Директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕнче, музыка учителĕнче тăрăшать. Катекри шкула çитсе ачасене музыка пĕлĕвĕ пама та ĕлкĕрет.

– Пилĕк çултах купăс калама вĕреннĕ эпĕ. Никам хистенине те, пускалама хăнăхтарнине те астумастăп. Почтальонра ĕçленĕ инке мана питĕ юратнă çав, Канашран купăс илсе килсе панăччĕ. Епле хĕпĕртенĕччĕ, тетте тавраш та кирлĕ пулман. Çав кунран эпĕ ăна алăран яман тесен тĕрĕсрех те пуль. Атте енчисем те, анне енчисем те – пурте купăсçăсем. Пичче те, йăмăк та çав тери илемлĕ кĕвĕсем выляççĕ. Юнра вăл пирĕн. Ывăлăма музыка шкулне вĕренме ярас шухăшпа пурăнатпăр. Вăл та пĕчĕккĕллех юрра-ташша ăста, – чунне уçать Виталий Кузьмич.

Кăçал районта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалласа "Алăкран тухрăм – тайăлтăм" фестиваль-конкурс йĕркеленĕ. Виталий Дмитриев йĕркеленĕ арçынсен "Татмăш Ен" ушкăнĕ пĕрремĕш вырăна тухнă унта. Çакăн хыççăн республикăри 2-мĕш фестиваль-конкурса чĕнсе илнĕ вĕсене. Кунта та çынсен чун-чĕрине тыткăна илме пултарнă.

– Конкурс Трактор тăвакансен культура керменĕнче иртрĕ. Эпир, ултă арçын, пурте салтак тумĕпе, сцена çинче юрă шăрантаратпăр. Залри икĕ арçын, конкурса килнĕскерсем, пĕр кĕтесе тăнă та çак юрра макăрса итлесе тăраççĕ. Кайран пире: "Ах, сăмахĕсем ытла йывăрçке, чĕрене татса илеççĕ", – терĕç. Ахальтен диплома тивĕçмерĕмĕр пуль, – хавхаланса каласа кăтартать Виталий Дмитриев. Çĕнĕ Шуртанра çуралса ӳснĕ Янкăлч ял тăрăхĕн пуçлăхне Анатолий Кротова та хăйсенчен хăварман, ăна та пĕрле пысăк сцена çине илсе тухса юрлаттарнă. Конкурс пирки сăмах пуçарнă май чăтаймарĕ, куççуль кăларттаракан "Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать" юрра урам варринчех юрласа ячĕ Виталий Дмитриев.

Виталий Кузьмич çавăн пекех Катекри шкулта Г.Васильева, Э.Митрофанова вĕрентекенсемпе пĕрле "Илем" ансамбле ертсе пырать. Пĕтĕмпе 90 ача çӳрет пултарулăх ушкăнне. Ашшĕ-амăшĕ сцена çине тухма тĕпренчĕкĕсем валли хитре кĕпесем çĕлеттернĕ. Икĕ çул каялла "Илем" ансамбль "Пĕчĕк çеç путене" ача-пăча конкурсĕнчен лауреат пулса таврăннă.

– Кăмăл туртнипе, юрласташлас килнипех çӳреççĕ ачасем. Пĕчĕккĕллех сцена çине, халăх умне тухса уçăлаççĕ, вăтанма пăрахаççĕ, хăйсене ирĕклĕ тытма хăнăхаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ питĕ маттур, ачисене аталантарас тесе темĕн тума та хатĕр. Çакă та савăнтарать, – шăпăрлансен пултарулăхĕшĕн хĕпĕртет Виталий Кузьмич.

Ялти клубăн чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕсенчен пĕри вăл – çамрăк ăру кун-çулне сутă та пуян, интереслĕ йĕркелеме пулăшасси, çавăн пекех йăлайĕркене, культурăна упраса хăварасси. Ăна пурнăçа кĕртме кашни çĕртех тĕрлĕ майпа усă кураççĕ. Вăтакас Татмăшри культура çурчĕ вара кĕрлесе кăна тăрать паян. Хăюллăнах "Виталий Кузьмич пуррипе" тесе калас килет. Клубра тăрăшаканшăн чи кирли алăри диплом мар, турă пани, чунра хăйне майлă хăват пурри, халăхшăн çунни... Кунта нумай пулмасть çеç ĕçе пуçăннă Виталий Кузьмич Дмитриев шăпах çавăн пек çынсенчен пĕри. Ахальтен мар ăна кăçал ЧР Культура министерствин Хисеп хучĕпе чысланă.

Сцена валлиех çуралнă вăл. Çав вăхăтрах ялта çирĕп хуçалăх тытса пырать. Икĕ лаша, 60 ытла сурăх унăн паян. Картиш тулли – чăхчĕп, хур-кăвакал. Пахчине çĕнĕ йышши мунча купалама тытăннă. Алли тĕлĕнмелле çыпăçуллă. Çакă хăй ăсталанă хитре, аякран илĕртсе ларакан хапхаран та курăнчĕ. Çемье, кил, ача-пăча, тăвансен пурнăçра унăшăн чи пысăк вырăн йышăнаççĕ. Маттур арçын сахал мар-ха пирĕн хушăра. Вăхăтра ĕçлеме те, савăнма та вăхăт тупаççĕ вĕсем.

Елена АТАМАНОВА.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ПУЛТАРУЛĂХ

Ялшăн тунсăхлакан ӳнерçĕ



Иртнĕ эрнере Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче Сергей Андреевăн ĕçĕсен куравĕ уçăлчĕ.

Сăрă ăстин картинисем чăннипех те чун-чĕре хĕлĕхне хускатрĕç. Ăшăлăх, ырăлăх, чăнлăхпа килĕшӳ тапса тăрать вĕсенче.

Сергей Станиславович хулара çуралса ӳснĕ. Тен, çавăнпах çыхăннă-ши, ялшăн тунсăхлани сисĕнет унăн ĕçĕсенче. Картишĕнчи выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке, çамрăк пулăçсемпе сунартан таврăнакан арçынна сăнлать и е кайăксем аякран тăван тăрăха вĕçсе килнине кăтартать-и – тĕлĕнмелле чĕрĕлĕх... Илеме, ĕлккенлĕхе малти вырăна хурать художник. Картинăсенчи çыннисем те ырă, ăшă кăмăллă, лăпкă чунлă унăн. Çутçанталăка, тăван тавралăха юратать вăл. Акă "Çыран леш енче" ӳкерчĕк тунсăхпа тулнă. Шыв хĕррине никам та çук, пушă кимĕсем çеç.

Ӳнерĕн тĕрлĕ жанрĕнче ĕçлет вăл. Унăн произведенийĕсенче графика шкулĕн тата вырăс живописĕн йăлипе çыхăннă ӳнер пахалăхĕ упранса юлнă. Сăрă ăсти ирĕклĕхе юратни яр уççăн курăнать. Мĕнле курать, çавнашкал, нимĕн ӳстермесĕр, хитрелетмесĕр сăнлама хăнăхнă художник. Ликăна мала хурать, вăл ăна питĕ çывăх. Тĕссен пуянлăхĕпе усă курма пĕлни тата шалтан тапса тăракан вăй сăрă ăстине умри тĕллевсене пурнăçа кĕртме май парать.

– Ӳнер шкулне эпĕ 12 çултан çӳреме тытăннă. 8-мĕш класра Шупашкарти ӳнер училищин вĕренекенĕ пулса тăнă. Сăрă ăстисем тăвансен хушшинче татах та пур, иккĕмĕш сыпăкри аппапичче лайăх ӳкерет. Чăн пурнăçпа шайлашса тăракан лайăх картина ӳкерес тесен ытларах тухса çӳремелле, сăнамалла. Çавна май республикăри ялсене те çитетĕп. Хулара та хитре вырăн нумай, – чунне уçать Сергей Станиславович.

Сергей Андреев халĕ Шупашкарта иртекен кĕрхи черетлĕ курава хатĕрленет.

Республикăри, хулари тата çывăхри регионсенчи куравсене 1994 çултанпа хутшăнать вăл. Унăн ĕçĕсене Чăваш Енре кăна мар, Мускавра, Чулхулара, Хусанта тата ют çĕршывра та тивĕçлипе хаклаççĕ.

Елена ГЛУХОВА.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

АР КУРĂКĔ

Хăват чакасран...

Çулсем иртнĕ май этемлĕхĕн вăйлă çурринчен чылайăшĕ ар хăвачĕ чакасран шиклеме пуçлать. Вăрттăнлăх мар, теприсем çамрăклах йывăрлăх туяççĕ ку енĕпе. Çак ыйтусене татса парас тесе арçынсем тĕнче хĕррине те тухса кайма хатĕр. Çитменнине, юлашки вăхăтра час-часах тĕлĕнтермĕш йохимбе çимĕçĕ пирки калаçаççĕ. Çук, çамрăклăха тавăрас тесе ӳсен-тăран шыраса тропик çĕршывĕсене тухса кайма кирлех мар. Сиплĕ курăк хамăр çĕр çинче, хамăр пахчарах ӳсет.

Çуркунне **пахча кĕпçи** тата **сельдерей** лартма ӳркенмелле мар. Вĕсем те ар хăватне вăйлатаççĕ. Салата асăннă ешĕл куракcене хăюллăнах хушăр. Пахча кĕпçипе сельдерейрен сĕткен те хатĕрleme пулать. Ăна кунне виçĕ хутчен икĕ чей кашăкĕ ĕçмелле.

Садра, паллах, кашнийĕнех **хăмла çырли** пур. Вăл та ар хăвачĕ вăйсăрланнинчен пулăшать. Енчен те çырлине типĕтме ĕлкĕртĕр пулсан ăна эрехе ярăр, кайран вăйсăр çулăм çинче типĕтĕр, тĕвĕр те кашни ир шывпа ĕçĕр.

Вĕлтĕрен те ар хăвачĕ чакнинчен пулăшать. Ăна çуркунне пуçтармалла.

Вăрманта ӳсекен **кушак курăкне** /валериана лекарственная/ килте те ӳстерме май пур. Курăка вĕри шывпа пиçĕхтермелле. Çак шĕвек тĕп нерв тытăмне лăплантарать, ар вăйĕ чакассинчен пулăшать. Ăна **чĕре курăкĕпе** /пустырник/ тата **пĕтнĕкпе** хутăштарса ĕçни аван.

Ылтăн тымартан /женьшень/ хатĕрленĕ спирт шĕвекĕ те ар вăйне ӳстерет.

Чӳрече анинчи **пурнăç курăкĕ** /алоэ/ ку енĕпе калама çук усăллă. Унăн сĕткенне пăчăртаса кăлармалла та пĕр кашăк пылпа хутăштармалла. Шĕвеке кунне виçĕ хутчен пĕр чей кашăкĕ ĕçмелле. Пурнăç курăкĕн экстрактне аптекăра та туянма пулать. Сиплев курсĕ – 2-5 эрне.

Ар хăвачĕ чакнинчен çавăн пекех вăрманта, уйхирте, шурлăхра тĕл пулакан сиплĕ курăксем – **сарă кушак ури** /бессмертник/, **упа çырли чечекĕ** /бузина черная/, **тулă курăкĕ** /дымянка лекарственная/, **сар çип ути** /зверобой/ – аван пулăшаççĕ.

3 тунтикун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25 «Без свидетелей» 16+
15.10 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ДОМ С ЛИЛИЯМИ» 16+
23.45 «Городские пижоны» «Как избежать наказания за убийство» 18+
1.15 Х/ф «ОБЕЗЬЯНЬЯ КОСТЬ» 16+
3.05 Х/ф «ДРАКОНИЙ ЖЕМЧУГ: ЭВОЛЮЦИЯ» 12+

РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
10.00 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «МАРЬИНА РОЩА» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СВОЯ ЧУЖАЯ» 12+
22.55 Т/с «ЧУЖОЕ ГНЕЗДО» 12+
0.50 Х/ф «ТАБАЧНЫЙ КАПИТАН»
2.45 Т/с «ПРОСТИ МЕНЯ, МАМА» 12+

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.35-11.55 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15 «Наблюдатель»
11.15, 22.00 Х/ф «МИХАЙЛО ЛОМОНОСОВ». «ОТ НЕДР СВОИХ»
12.35 «Линия жизни»
13.30 Д/с «Мировые сокровища культуры»
13.45 Х/ф «ПОЗДНИЙ РЕБЕНОК»
14.50 Д/ф «Фенимор Купер»
15.10 Х/ф «ОТПУСК В СЕНТЯБРЕ»
17.35 «Мир из-за столика» Прага
18.05 Д/ф «Дух дышит, где хочет...»
19.15 Неизвестный Петергоф... «В поисках утраченного»
19.45 «Спокойной ночи, малыши!»
19.55 Д/ф «Я буду выглядеть смешно. Татьяна Васильева»
20.35 «Абсолютный слух»
21.15 Д/ф «Михаил Бонч-Бруевич. Первый красный генерал»
23.30 Худсовет
23.35 Х/ф «ВРЕМЯ ДЛЯ РАЗМЫШЛЕНИЙ»
0.45 Д/ф «Альфред Шнитке. Дух дышит, где хочет...»
1.40 «Полиглот»
2.25 Ф. Мендельсон. Концерт для скрипки с оркестром. Дирижер и солистка Л. Исакадзе

НТВ

6.00 «Солнечно. Без осадков» 12+
8.10 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.30 Сегодня
10.20 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00, 16.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
19.40 Т/с «НОВАЯ ЖИЗНЬ СЫЩИКА ГУРОВА» 16+
21.30 Т/с «ШЕФ» 16+
23.50 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК» 18+
1.44 1.45 «Спето в СССР» 12+
2.40 Т/с «ХОЛМ ОДНОГО ДЕРЕВА» 12+
4.55 «Все будет хорошо!» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.10, 11.50 Х/ф «ПАНДОРА» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «ПАНДОРА» Окончание фильма 16+
17.50 «Осторожно, мошенники!» 16+
18.20 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЖИЗНЬ И ПРИКЛЮЧЕНИЯ МИШКИ ЯПОНЧИКА» 16+
21.45 Петровка, 38 16+
22.30 «Приштинский бросок» 16+
23.05 Без обмана. «Медовая ловушка» 16+
0.00 События. 25-й час
0.20 Д/с «Династiя. Дважды освободитель» 12+
1.10 «Экипаж» 12+
1.45 Х/ф «ОТЕЦ БРАУН-2» 16+
3.30 «Обложка. Пришествие Майкла Джексона» 16+
4.00 Д/с «Вся правда о львах» 12+

РЕН

5.00 «Секретные территории»: «Апокалипсис. Обратный отсчет» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 7.30 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 16.30, 19.30, 23.00 «Новости» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 Д/ф «Рай обреченных» 16+
12.00, 16.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
14.00 Х/ф «БРАТ» 16+
17.00 «Тайны мира» с Анной Чапман
18.00 «Документальный проект» 16+
20.00 Х/ф «БУМЕР» 16+
22.00, 1.30 «Водить по-русски» 16+
23.25, 2.00 Х/ф «БОРДЖИА» 18+
3.00 Х/ф «БОРДЖИА» 16+
4.00 «Территория заблуждений» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

06.00 «Врачи». Телепрограмма /16+/
07.00 «Наша Республика. Главная тема» /12+/
07.30 «След в истории» /12+/
8.00 «Хурт йăви». Чăвашла куçарнă фильм /12+/
10.00, 18.00 Т/с «Близнецы» /12+/
11.00 Х/ф «Время желаний» /12+/
13.00 «Сарпиге». Балет в 2-х актах по сказке Е.Никитина /6+/
14.30 М/с «Танчики» /12+/
15.00 Т/с «Ермоловы» /12+/
16.00 Т/с «Одна ночь любви» /12+/
17.00 Д/ф «Цирковые трагедии» /16+/
19.00, 22.30 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
19.15 «Юрă çаврăмĕ» /12+/
19.30 «Пехил» /12+/
20.00, 23.00 «Республика» информационная программа
20.30 «Акилбупсер» /6+/
20.45 «Сделано в Чувашии» /12+/
21.00 «Экономика в деталях» /12+/
21.15 «Уйăх тулнă каç». Илемлĕ фильм /12+/
23.30 Х/ф «Опасный Бангкок»

Чăваш Наци радиовĕ

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 – Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)
6.10-6.30, 7.10-7.30 Ирхи кăмăл (12+) 7.30-8.00, 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Наша Республика. Главная тема. (12+). 9.10-10.00 Не формат. (12+) 06.30-07.00, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Ялтан яла. (12+) 11.30-12.00 Призвание (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем . (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Пурнăç çынни. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Артистсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă. (12+). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Çĕнĕ кĕнеке
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы - вместе
7.58-8.00 Погода
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 От 2 до 5
18.29 Библия сегодня
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

4 ытларикун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20, 4.25 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.25 Модный приговор
Сивĕтмĕшри лайăх мар шăрша пĕтерме çавăн пекех лимон татăкĕсем касса хуни те пулăшать.

Пушмак сăнне тавăрма

Замш пушмака наждак хучĕпе е типĕ тăварпа сăтăрмалла, унтан ятарлă щеткăпа тасатмалла. Тĕсĕ кайнишĕн питех пăшăрханмалла мар: çак вырăна лайăх тасатса тушьпа е пусма сăррипе лектерме юрать.

Йĕпеннĕ пушмака хĕвел çинче е çулăм çывăхĕнче типĕтмеççĕ. Ăна типĕ çĕтĕкпе сăтăрса касторка сĕрмелле. Шала кивĕ хаçат тултарса чалăшшăн лартмалла. Типнĕ вăхăтра тĕпĕ çĕре ан перĕнтĕр.

Ăнман хуняма

Çуркунне çитнĕренпех ĕçтешсем манран шӳтлесе пĕтерейместĕç. Канмалли кунсем çитсенех витлеме пуçлаççĕ. Ара, пахчаçимĕç туса илмелли вăхăтра чылайăшĕ дачăна, яла çул тытать-çке. Эпĕ те çаплах. Кашни эрнере мар пулин те çемьепе час-часах тăван тăрăха пуçтарăнатпăр. Анчах эпĕ хуняма патне мар, хама çуратса ӳстернĕ тăван киле çӳретĕп.

"Хуняму çыртать-им?" – ялтан таврăнсан ăçта пулнине тĕпчеççĕ юлташăмсем. Çыртмасть-ха та... Анчах пĕр-пĕрне килĕштерейместпĕр.

Качча кайни вунă çул та çитрĕ ĕнтĕ. Ывăлăмăр иккĕмĕш класа каять, пĕчĕк хĕр пĕрчи улттă тултарать. Мăшăрпа та хутшăнусем йĕркеллĕ. Чăшăктирĕк камăн шăкăртатмасть вара? Тавлашасси, кӳренесси пирĕн те пулать. Иксĕмĕр те ĕçлетпĕр. Упăшка айккине чупни хăлхана кĕмен. Эрехне уявсенче чухласа ĕçет. Кĕскен – пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Вăт çав хуняма çеç ăнмарĕ...

Темшĕн килĕштермерĕ вăл мана. Кутăннишĕн юратмасть, эпĕ вара ăна ĕçлесе пулăшасран хăранипех ун патне çӳреместĕп тетĕр пулĕ-ха.

Çук. Ĕçрен нихăçан та пăрăнман. Анне те ача чухне те кăнтăрлаччен çывăрттарнине ас тумастăп. Ун чухне те ирех тăрататчĕ те – халĕ пушшех канса выртаймăн. Çуллахи кун ыйха кăнтăрлаччен тăсни намăс та. Ара, ĕçĕ те сахал мар ялта. Çумкурăкĕ те çывăрмасть. Çывăх çынсене кăмăлтан пулăшатăп вара.

Паллах, хуняма патне пачах кайман мар. Анчах питĕ сайра çеç çитетĕп. Пĕр-пĕр пысăк ĕç пуçăнсан е кĕрекене пухăнсан.

Пирĕн "юрату" мĕнле пуçланнине те каласа хăвармалла ахăр. Алюшпа çулталăк ытла çӳреттĕмĕр вăл вăхăта. Пĕр чăмăра пухăнса шăкăл-шăкăл пурăнасси пирки те пĕрре мар калаçнă. Анчах малтан хунямахуняçапа паллашмалла-çке. Çуралса ӳснĕ ялăмăрсем пĕрпĕринчен аякра мартанах Алюш машинипе хуларан час-часах лартса каятчĕ-ха. Çавăнпах ăна аттепе анне паллатчĕç, хапăлласа йышăнатчĕç. Эпир килнĕ тĕле аннем тепĕр чухне ятарласа кукăль те пĕçеретчĕ. Пулас кĕрӳшне час-часах чей ĕçме чĕнетчĕ.

Çапла кĕркунне çĕрулми кăларма вăхăт çитсен пулас мăшăрăм яла пуçтарăнчĕ.

– Тен, мана та пĕрле илĕн? Ĕç вăхăтĕнче ытлашши пулмăп, – сĕнтĕм эпĕ.

Савни манпа савăнсах килĕшрĕ. Çапла эрнекун ĕç хыççăн çула пуçтарăнтăмăр. Малтан пирĕн пата кĕрсе тухнăран хуняма патне çитнĕ тĕле каç та пулнăччĕ.

Кил умне чарăнсан шалтах тĕлĕнтĕм. Хуянама карчăк кĕтмест курăнать – пӳртре пĕр çутă та çук.

– Анне çывăрма выртнă ĕнтĕ, шăллăм урама тухнă пуль, – терĕ Алюш. Хуняçа ун чухне килĕнче марччĕ. Аякри хулана ĕçлеме вахтăпа çӳрет вăл.

Маншăн ку пысăк кĕтменлĕх пулчĕ. Эпир кĕрсен те пăянам вырăн çинчен те тăмарĕ.

– Çăлтăрсем пурччĕ-и? Пĕлĕтлемен-и, – ыйтрĕ вăл ывăлĕнчен пуçне çĕклемесĕр.
– Ыран пахчана тухма çанталăкĕ çеç патăр ĕнтĕ...

Эпĕ пачах çук тейĕн. Маншăн ку питĕ кăнттам пулчĕ. Ара, эпĕ кун пеккине курман та! Çывăх çыннăмсем хăть те мĕнле каçа юлса çитсен те çутă çӳнтермеççĕ. Темĕнле ывăнсан та кĕтсе илеççех. Хирĕç тухаççĕ, тутлă апатпа сăйлаççĕ...

Мана вара çĕнĕ çуртра сĕтел хушшине чĕнме мар, сывлăх та сунмарĕç. Юрать-ха анне патĕнче çисе тухнăччĕ. Унсăрăн выçăллах выртмалла пулатчĕ-тĕр. Çапла пĕр курка шыв ĕçнипех çырлахрăм.

Ирхине вăрансан та йăраланса выртмарăм. Тăтăм та апат хатĕрлекен хуняма патне пырса хам сăмах чĕнтĕм.

– Мĕнпе пулăшас? – ытрăм сăпайлăн.

Вăл пĕкнĕ пуçне çĕклесе ман çине халь-халь сĕкесле вăкăр евĕр тинкерчĕ. Каштахран:

– Алюша тăрат. Тислĕк хырмалла, – терĕ.

Çапла савнипе иксĕмĕр картишнелле тухрăмăр. Вак ĕçсемпе аппаланнă хыççăн калак йăтса çĕрулми кăларма тытăнтăмăр. Кунĕпех ĕçлерĕмĕр. Хунямапа калаçма кăмăл та, вăхăт та пулмарĕ.

Каçхине ывăннине пăхмасăр çĕнĕ килте урай çуса тухрăм – мунчаран тухсан çывăрма сывлăш уçă пултăр терĕм.

– Таса пулнине хам та юрататăп-ха та... – ним калама аптранăран чĕнчĕ Алюш амăшĕ.

Темиçе йăран çеç юлнăччĕ те тепĕр кун пахчана тухма васкамарăмăр. Кăнтăрлаччен ĕçрен пушантăмăр та. Эпĕ тăрăшуллине курса-ши иккĕмĕш кунхине хуняма кăмăлĕ кăштах çемçелчĕ. Вăл кукăль пĕçерсе çитерме пулчĕ. Анчах сĕтел хушшине вырнаçсан пĕр татăкне чăмласа антарма та çăмăл пулмарĕ. Хăнана килнĕ асламăшĕпе кукамăшĕ куç илми пăхрĕç. Те тиркерĕç вĕсем, те ырларĕç. Ку асапа нумай тӳсейменрĕм – тăраннă сăлтавпа тула тухрăм.

Пире ăсатнă чухне те кăнттам пулчĕ хуняма. Ман пирки эпĕ камне ыйтакан кӳршине те хавас пулмарĕ.

– Майри пуль. Ăçтан пĕлес? – терĕ типпĕн.

Кашнинчех çапла йышăнать. Эпир туй пирки калаçма тытăнсан та тутине мăрт-март пăрнăччĕ. Мĕншĕн килĕштермест мана? Халĕ те пĕлместĕп. Çавăнпах питĕ сайра çӳретĕп те. Мĕншĕн канăçсăрлантарас?

ТАРУК.

ВĂТ, ТĔНЧЕ!

Арăм хыççăн арăм

Мăнукран тĕлĕнсе пĕтерейместĕп. Виççĕмĕш хутчен авланать ĕнтĕ. Пĕрремĕшĕпе пĕрлешсен çулталăккранах уйрăлчĕç. Марине ют çĕршывра тĕпленме кăмăл турĕ. Петĕр унпа кайма килĕшмерĕ. Тĕрĕссипе, хамăн та ăна аякка ярасах килместчĕ. Ун хыççăн Наталипе паллаштарчĕ пире. Хула хĕрĕ пулин те тăрăшуллă та маттурччĕ вăл. Ачаллăскерччĕ. Унпа хут уйăрттармасăрах пурăнчĕç. Пĕр хушăран кин пирĕнтен сивĕнчĕ. Мăнукăм сăлтавне палăртмарĕ. Пĕррехинче çеç тарăхсан ачин ашшĕ тупăннине пĕлтерчĕ. Халĕ акă Ольăна качча илетĕп тесе тăна кăларать. Ку ачапа мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Алă сулмалла-ши? Хăй пĕлнĕ пек пурăнтăр теме те пултараймастăп – унăн шăпишĕн чунăм ыратать-çке...

Эпĕ вара ĕмĕре пĕр упăшкапах ирттертĕм. Те юратнă мăшăра? Пирĕн кăмăла никам та ыйтман. Эпир çак туйăм мĕн иккенне те пĕлмен. Паянхи çамрăксем те ăнлансах пĕтереймеççĕ-тĕр, ашкăнаççĕ, аташаççĕ – çавă çеç.

Мана, сăмахран, вăрласа кĕнĕ те пач палламан арçынпа хĕве хупнă. Пĕр-пĕрне пĕрре куринччĕ хăть. Çук. Матвин пирĕн ялти тăванĕсем ăна мана качча илсе пама шухăшланă та...

Апла пулин те шăпана ӳпкелеместĕп эпĕ. Пурнăçăм аван иртрĕ. Мăшăрпа эпир яланах килĕштернĕ. Пĕрпĕрне ăнланаттăмăр, хисеплеттĕмĕр.

Пур ĕçе те канашласа пурнăçлаттăмăр. Ултă ача çуратса ура çине тăратрăмăр.

Паянхи çамрăксем пĕрпĕрне итлеме пĕлмеççĕ çав. Кашни хăй хуçа пуласшăн. Эпир вара тепĕр чухне шыв сыпнă – хирĕç чĕнмен. Темле пулсан та пурнăç тунă.

Петĕр мăнукшăнах пăшăрханатăп-ха. Пурнăçне епле майлаштарса мĕнле ирттерĕ-ши? Арăм хыççăн арăм улăштарни йĕркеллĕ мар-çке...

МАРИЯ И.
Хĕрлĕ Чутай районĕ.

ВĂТ, ТĔНЧЕ...

Юрату палли

Урампа Маюк килет. Пуçĕнчи тутăрне тӳрлеткелет. Ăна хирĕç Анна утать-çке, сăмах чĕнмесĕр иртме çук кунта.

– Салам, ăçталла вĕçтерет ку ирех? – ыйтать Анна Маюк çине тĕлĕнсе пăхса. Мĕн тăвас тетĕн, куçĕ ыйтать, ирĕксĕрех каласа пама тивет ĕнтĕ.

– Страсте, хунеме патне, кӳршĕ яла кайса килесшĕнха, – айккинелле пăхать Маюк.

– Мĕн пулчĕ тата– ирех ун патне вĕçтеретĕн?

– Куратăн вĕт, мĕн ыйтса тăратăн?

– Ара, куратăп-ха та... Мĕн-и, туту çине кĕсен тухрĕ-и? Куçу та кăвак.

– Кăвак çав, кăвак, – ал сулать Маюк. – "Юрату палли" ку. Кĕсен мар. Курмастăн-им?

– Э-э, апла-и, – куçĕ çуталать Аннан. – Пулать, пулать. Унашкалли те, "юрату палли" те... Вара, ыйтма аванах мар та, так простă çапмарĕ пуль-ха?

– Так простă мар ĕнтĕ, сăлтавĕ пулчĕ-ха, çывăрнă чух. Но, манăн "хитре" сăна куртăр тетĕп, хуняма хăй куçĕпе куртăр. Тональнăй крем сĕрес тенĕччĕ, пултăр терĕм. Кăвак куçпах тухрăм. Атту тек мухтанать ывăлĕпе. "Ман Петя компьютер туянчĕ, ман Петя телевисăр туянчĕ, ман Петя холодильник..." Ăна пĕтĕм çын туянать вĕт, вăл çеç мар. "Эсĕ сĕт уксипе анчах пурăнатăн, урăх нимĕн те ĕçлеместĕн", – тет. Ĕне усрама çăмăл-и? Анна, хăвах шухăшласа пăхсам. Мĕн чухлĕ апат хатĕрленĕ.

– Эй, тĕнче-е-е, – пĕççине шарт! çапать Анна. – Вăт, шуйттан карчăкки э? Эсĕ унăн ывăлне çын турăн та, мĕн калать? Эй-яй-яй!

Маюкăн куçĕ шывланать. Вĕри сывлăшпа сывлакан хĕрарăмăн тути те чĕтрет.

– Вăт, çавăнпа васкатăп. Веç каласа паратăп.

– Тĕрĕс, тĕрĕс, Маюк, маххă ан пар. Эсĕ пĕччен пӳрт лартнă, вăл ямăт çĕре килсе кĕчĕ, халь сана хĕнет. Ыйтма аван мар та, мĕншĕн лекрĕ вара?

– Чиперех çывăрма выртрăмăр, – сăмсине нăшт! туртать Маюк. – Эпĕ тĕлĕрсе кайма та пуçланăччĕ. Шăп выртатăп.

– Вара? Вара? – ăна куçран пăхать Анна. – Малалла...

– Малалла çапла пулчĕ, – сывлăш çавăрса илет Маюк. – Ну, тута ыратать мур. Мĕнле ирттерсе ярас, э?

– Эй, иртĕ-ха, эс малаллахине кала хăвăртрах.

– Ман арçынккана тем шухăш кĕрсе кайрĕ: "Эс мана юрататăн-и?" – тет. Хăйĕнчен "перекар" кĕрет, сывлама çук. Тарăхса кайрăм та: "Сана юратиччен 90-ри Мĕкĕтене савам!" – тесе хутăм. Сисмерĕм те, тутаран мĕнле туртса çапрĕ. "Тепре кала-ха!" – тет. Тепре те каларăм. Пуçран шап! тутарчĕ. Çавăнпа куçа кăвак анчĕ курăнать. "Тепĕр хут "повтори!" – тесе кăшкăрать. Чĕлхене чартăм. Тинех. Ухмах мар-и? Ӳсĕр çынна ма чĕнетĕп-ши?

– Эй, Тур анчах! Ма чĕнетĕн-ши? Хам та кулянсах кайрăм саншăн. Ман Витали тошă этем мар. Чĕлхене чармасан "патак" айĕнчен те кăлармĕ, ачам. Пирĕн, хĕрарăмсен, чеерех пулас пулать. Эй, сана...

– Халь пĕлеп те çав, ун чух тавлашас килет. Чăтăм çук.

– Ара, çапла полмасăăр, – пуçне сулсах унпа килĕшет Анна.

– Хуняма та пĕлтĕр, хăйĕн ывăлĕпе ан мухтантăр.

– Ийĕа, но, тĕрĕс. Ан тив, ывăлне чартăр. Вĕренттĕр хĕрарăма мĕнле хисеплемеллине. Эп пулсан-и...

– Кайтарам-ха эппин, – анаталла çаврăнса пăхрĕ Маюк. – Вăн, ман хыçранах килет. – Тарас хăвăртрах.

– Уй, чăнах та, – пуçне сулать Анна. – Ну, мĕн пулса пĕтет ĕнтĕ халь? Ай, тартар... Ну, "интерес пĕр чĕрес", – пĕрре тăвалла васкакан Маюка пăхса юлать Анна, тепре анатран хăпаракан Петяна тимлет. – Хăвăртрах Роза куммана кайса каласа кăтартас. Ку хыпара пĕлсен – ял хĕпĕртет. Çав кирлĕ-ха. Ĕни сĕт нумай парать. Çынна вĕчĕрхентерет. Эй, çавăн пек вăл пурнăç...

Лидия САРИНЕ

Антон ЧЕХОВ

Хĕрарăмсем

Федор Петрович, N-ски кĕпĕрнинчи халăх училищисен директорĕ, хăйне хăй тĕрĕслĕхшĕн тăрăшакан тата каçарма пĕлекен çын вырăнне хураканскер, пĕррехинче хăйĕн канцелярийĕнче Временский вĕрентекене йышăннă.

– Çук, Временский господин, – тет вăл, – ĕçрен каймах тивет. Сирĕнни пек сасăпа вĕрентекен пулса ĕçлеме юрамасть. Еплерех çухалчĕ вара вăл сирĕн?

– Эп, тарланăскер, сивĕ сăра ĕçрĕм... – пăшăлтатать вĕрентекен.

– Питех те шел! Вунтăватă çул çын ĕçленĕ те ĕçленĕ, сасартăк – çакнашкал инкек! Шуйттан пĕлет-и, еплерех вактĕвекшĕн хăвăн карьеруна пăсма тивет. Халь вара мĕн тума шутлатăр эсир?

Вĕрентекен хуравламасть.

– Эсир çемьеллĕ-и? – ыйтать директор.

– Мăшăрăм тата икĕ ача, сирĕн превосходительство... – пăшăлтатать вĕрентекен.

Пĕр хушă шăп. Директор сĕтел хушшинчен тухать, хумханса каллĕ-маллĕ утать.

– Аптăрамаллипех аптăратăп, мĕн тумалла ман сирĕнпе? – тет вăл. – Вĕрентекен пулса ĕçлейместĕр эсир, пенсие кайма иртерех-ха... Сире пач пулăшмасăр паллăмарлăха ăсатма та аван мар мана. Эсир пирĕншĕн хамăр çын, вунтăватă çул ĕçленĕ эсир, апла-тăк пирĕн пулăшмаллах сире... Анчах та мĕнле пулăшмалла? Мĕн тума пултаратăп эп сирĕн валли? Ман вырăна лартса пăхăр-ха эсир хăвăра: мĕн тума пултараятăп эп сирĕн валли?

Шăп. Директор çаплах каллĕ-маллĕ утать те шухăшлать, Временский те, хăйĕн инкекне пула асапланаканскер, пукан хĕррине ларать, вăл та шухăшлать. Сасартăк директор хĕвел пек çиçме пикенет, çитменнине тата икĕ пўрнине вылятса сасă кăларать.

– Тĕлĕнетĕп, мĕнле эпĕ çакна маларах аса илеймерĕм! – хыпаланса калаçма пуçлать вăл. – Итлĕр, акă мĕн сĕнме пултаратăп эпĕ сире... Çитес эрнере пирĕн приютра çырусемпе ĕçлекен çын отставкăна каять. Кăмăлăр пулсан, вырнаçсамăр унăн вырăнне. Акă – сире!

Временский те, кун пек ырă кăмăллăха кĕтменскер, çиçме пуçлать.

– Питех те лайăх, – тет директор. – Паянах ĕçе илме ыйтса çырсамăр...

Временские ăсатса ярсан Федор Петрович лăштах пулать, савăнать те: унăн умĕнче текех асапланса пăшăлтатакан педагогăн пуçне уснă кĕлетки тăмасть тата ăна хăй Временские ирĕклĕ ĕç вырăнĕ сĕнсе тĕрĕс туни, хăйне таса чунлă, ырă кăмăллă та йĕркеллĕ çын пек тытни те савăнтарчĕ. Анчах та ку хавхаланупа савăнăç ытла нумай тăсăлмарĕ. Вăл килне таврăнсан, кăнтăр апачĕ çиме пикенсен, унăн арăмĕ, Настасья Ивановна, кĕтмен-туман çĕртен аса илех каять:

– Эх, чутах манса каяттăм! Ĕнер ман пата Нина Сергеевна килсе кайрĕ, вăл пĕр çамрăк çын пирки сăмах хускатрĕ. Сирĕн приютăрта ĕç вырăнĕ пушанать тет-и?..

– Çапла, анчах та вăл вырăна урăххине вырнаçтарма шантарнă та ĕнтĕ, – тет директор кăмăлсăррăн. – Тата эсĕ мана лайăх пĕлетĕн: эпĕ нихăçан та çынсене такам ыйтнипе ĕçе илместĕп.

– Эп пĕлетĕп, çапах та Нина Сергеевнăшăн, ман шутпа, ку йăлана пĕрре пăсма та юрать. Вăл пире тăванĕсене юратнă пекех юратать, эпир вара уншăн ку тарана çитиччен ним лайăххи те тăваймарăмăр-ха. «Çук» тесе калама, Федя, ан та шутла! Ялан хăв тăвас тенĕ пек туса эсĕ ăна та кўрентеретĕн, мана та.

– Кама сĕнет вара вăл?

– Ползухина.

– Мĕнле Ползухина? Лешне, Çĕнĕ çул уявĕнче пухура Чацкие вылянине-и? Çав джентльмена-и? Килĕшместĕп!

Директор апатне çиме чарăнать.

– Килĕшместĕп! – тет вăл тепĕр хут. – Турă упратăр мана!

– Анчах та мĕншĕн?

– Эс ăнлан, матушка: енчен те çамрăк çын хăй тĕллĕн ĕçлемест-тĕк, хĕрарăмсем пулăшнипе мĕн те пулин тăвасшăн-тăк, апла пулсан вăл – ниме тăманскер! Мĕншĕн вăл ман пата хăй килмест?

Кăнтăрлахи апат хыççăн арçын хăйĕн кабинетĕнче софа çине тăсăлса выртать те çĕнĕ хаçатсемпе тата çырусемпе паллашма пикенет.

«Хаклă Федор Петрович! – çырать ун патне хула пуçлăхĕн арăмĕ. – Эсир тахçан ман пирки эп çынсен чĕрисене витĕр куратăп, çынсене лайăх пĕлетĕп тесеччĕ. Халĕ вара çакна сирĕн хăвăрăн тĕрĕслесе пăхмалла пулать. Çак кунсенче сирĕн пата пирĕн приютăмăрта çырусемпе ĕçлекенĕн вырăнне ыйтма К.Н.Ползухин текенскер, маншăн вăл – ытарма çук маттур çамрăк çын, пырĕ. Каччи питех те кăмăллăскер. Ăна пулăшсассăн эсир хăвăр та ĕненетĕр...» т.ыт.те.

– Килĕшместĕп! – тет директор. – Турă упратăр мана!

Çакăн хыççăн директор Ползухина ĕçе илме сĕнекен çырупа паллашман пĕр кун та иртмест. Пĕр питĕ уяр та илемлĕ ирхине Ползухин хăй те персе çитет. Вăл – вĕçĕнĕ хура костюм тăхăннă, питне ут чуптаракансем пек тăрăшса хырса якатнă самăр çамрăк çын...

– Ĕçпе çыхăннă ыйтусемпе эп кунта мар, канцелярире йышăнатăп, – тет, унăн ыйтăвне итленĕ хыççăн, кăмăлсăррăн директор.

– Каçарăр та, сирĕн превосходительство, анчах та пирĕн пĕлĕшĕмĕрсем мана шăпах çакăнта килме сĕнчĕç.

– Хм!.. – тет директор, çамрăк çыннăн шĕвĕр вĕçлĕ пушмакĕсем енне курайманлăхпа тулнă куçĕсемпе тинкерсе. – Эп пĕлнĕ тăрăх, – тăсать вăл сăмахне унтан, – сирĕн аçăр пуян, эсир те чухăн мар, мĕн тума кирлĕ сире çак вырăна вырнаçтарма ыйтни? Шалăвĕ ытла та пĕчĕкиç!

– Эпĕ шалушăн мар, капла кăна... Çапах та хысна ĕçĕ-хĕлĕ-çке-ха...

– Апла иккен... Ман шутпа, тепĕр уйăхранах сире ку ĕç йăлăхтарать те эсир ăна пăрахатăр, çав вăхăтрах урăх кандидатсем пур, вĕсемшĕн ку вырăн – ĕмĕрлĕхе... Чухăнсем пур, вĕсемшĕн...

– Йăлăхтармасть, сирĕн превосходительство! – пўлет Ползухин. – Сăмах паратăп: эпĕ тăрăшса ĕçлĕп!

Директор тарăхса каять.

– Итлĕр-ха, – тет вăл, йĕрĕнчĕклĕн кулса, – мĕншĕн эсир тўрех ман пата килмерĕр, мĕншĕн малтан хĕрарăмсене чăрмантарас терĕр?

– Эп сире ку килĕшмессине пĕлмен, – хуравлать Ползухин, аванмарланать. – Тепĕр тесен, сирĕн превосходительство, эсир сĕнсе çырнă çырусене шута хумастăр пулсан, эп сире аттестацисене кăтартма пултаратăп...

Вăл кĕсйинчен хут кăларать, ăна директора тыттарать. Канцеляри чĕлхипе илемлетсе çырнă аттестаци айĕнче кĕпĕрнаттăр алă пусни пур. Кĕпĕрнаттăр çав хута вуламасăр, пĕр-пĕр сĕмсĕр хĕрарăмран хăвăртрах хăпас тесе çеç алă пусни тўрех курăнать.

– Нимĕн те тăваймăн, пуçăма таятăп... итлетĕп... – тет директор, аттестацие вуласан, ассăн сывласа. – Ыран ĕçе илме ыйтса çырма пултаратăр... Нимĕн те тăваймăн...

Ползухин тухса кайсан, директор хăйĕн йĕрĕнчĕклĕх туйăмĕсене ирĕке ярать.

– Ăçтисçук! – чашкăрать вăл, каллĕ-маллĕ утса. – Хăй тăвас тенине турĕ çапах та, ăнманскер, хĕрарăмсене килĕшекенскер! Çĕлен! Вылăх!

Директор хыттăн Ползухин тухса çухалнă алăк еннелле сурать, унтан сасартăк аптăраса ўкет, мĕншĕн тесен шăпах çак вăхăтра ун патне хысна палатин управляющийĕн арăмĕ кĕрсе тăрать...

– Эп йăпăртлăха кăна, йăпăртлăха кăна... – сăмахлама пикенет хĕрарăм. – Ларсам, кум, лар та мана тимлĕ итле... – Ну-с, сирĕн ирĕклĕ ĕç вырăнĕ пур тесçĕ... Ыран е паянах сирĕн пата Ползухин текен çамрăк çын килет...

Хĕрарăм калаçать те калаçать, директор вара ун еннелле тĕссĕррĕннĕ, нимĕн те курман куçĕсемпе тинкерет, вăл, халь-халь тăнне çухатса ўкме пултаракан çын пек, хĕрарăм еннелле пăхать те ячĕшĕн кулкалать.

Тепĕр кун, хăйĕн канцелярийĕнче Временские йышăннă чухне, директор ăна тĕрĕссине калама чылайччен хал çитерейместь. Вăл аванмарланать, сăмахĕсене пăтраштарать, калас тенине чылайччен калаймасть. Унăн вĕрентекенрен каçару ыйтасси, ăна тĕрĕссине каласа парасси килет, анчах та чĕлхи, ўсĕр çыннăнни пек, хуçине итлеместь, çитменнине тата хăлхисем те кĕрен тĕспе витĕнеççĕ. Сасартăк вăл хăйĕн канцелярийĕнче, хăйне пăхăнакан çын умĕнче хăйне айванла тытнăшăн тарăхмаллипех тарăхса каять. Пач кĕтмен-туман çĕртен вăл сĕтелне туртса çапать, сиксе тăрать, унтан тарăхса çапла кăшкăрать:

– Çук ман сирĕн валли вырăн! Çук тата тепĕр хут çук! Тек ан çулăхăр ман çумма! Ан асаплантарăр мана! Тасалăр, тархасшăн, пурте, тархаслатăп сире!

Çакăн хыççăн вăл канцелярирен тухать.

Валери ТУРКАЙ куçарнă.

СĂВĂ СĔВЕМĔ

Зоя СЫВЛĂМПИ

Юрату кĕтречĕ

Асилу варкăшне ерипен сĕртĕнем,
Чунăма вăл ачашшăн лăпкатăр.
Тавăрма çук пулсан та пачах иртнине
Пирвайхи туйăма кам-ха мантăр?

Тăкăнатчĕ çўлтен кăпăшка шурă юр,
Ылтăн-сарă ăсаннăччĕ кĕрĕ.
Çутçанталăкăн, тусăм, асамлăхĕ пур –
Вăл пире юрату парнелерĕ...

Ак каллех ерипен тухса тăчĕ ума
Тĕлпулу касĕн çутă кĕтречĕ.
Хĕллехи шурă юр пек таса туйăма
Асилсе манăн чунăм киленчĕ...

Пĕр самант

Пĕр самант. Пĕр самант асăмра:
Укăлча. Ешĕл тумлă йăмра...
Çăлтăрпа эрешленĕ тўпе,
Астарать вăл пире илемпе...

Каçхи шăплăх кĕвви илтĕнет,
Çавра уйăх унпа киленет.
Çак асамлă тўпе айĕнче
Эсĕ, эпĕ тата çут тĕнче...

Пĕр самант. Пĕр самант асăмра:
Çут шевле вăй вылять сăнăмра,
Ăшă туйăм лăпкать чунăма,
Çакна ĕнтĕ пулать-ши манма?

Сывламăп ассăн...

Кая юлса эс килтĕн ман пата:
Сана халь ĕнтĕ йышăнмасть чĕреçĕм.
Пушаннă. Çап-çарах кĕрхи ката,
Вăй-хал тупса ешереймест вăл вĕçĕм.

Ăна ласканă, авнă сивĕ çил,
Ун çавăнпах
Тураттисем аманнă...
Текех эс, тусăм, ман пата ан кил:
Каçар та, эп сана халь ĕнтĕ маннă...

Тăванĕ кĕтнĕ евĕр тăванне,
Сана аса илсе сывламăп ассăн.
Виçесĕр тунсăх чунăм çыранне
Пыра-пыра çапсан та кассăн-кассăн...

Пурнăç кĕрĕ

Ĕнер çеç пек шевле айĕнче
Савăнса ешеретчĕ тĕнче!
Ак паян тĕрлĕрен çул çине
Кĕркунне сапалать çулçине...

Пурнăç кĕрĕ те çитрĕ пулас,
Вăхăт хăвăрт шăвать. Мĕн тăвас?
Иртнине, тек кирек мĕн кала,
Тавăраймăн пачах каялла...

Пирĕн савăнăç халь – ачасем,
Мăнуксем – чи юратнă чунсем.
Çавăнпа пурăнассăм килет.
Çакă мар-и-ха çутă тивлет?

Çын шăпи вăл кашнин хăйне май:
Усалли те, ырри те самай...
Кун-çул кĕрĕ ак пирĕн тĕле
Илсе килчĕ хаваслăх, телей!

Шанатăп-ха ырра...

Кула-кула вылярĕ пулмалла
Телей тени манпа пытанмалла...
Кунта вăл килнĕ пулĕ – эпĕ çук,
Пулмарĕ вăл та эп шыранă чух...

Çамрăклăхра, тен, юлнă пытанса,
Çакна тин илтĕм эпĕ ăнланса.
Пуçне усман хăюллă çын кăна
Илейĕ пулĕ, тен, кĕтсе ăна.

Чăнах, ăçта çўрет-ши çав тивлет?
Ăна халь питĕ ман курас килет.
Ав ывăнтăм пĕрмай шыра-шыра.
Çапах та хам шанатăп-ха ырра...

Пĕлетĕп эп: пачах та ăнсăртран
Телей тени ал сулĕ-ха сăртран,
Хавхаланса вара çине-çине
Пулса вăл çумăр çĕвĕ ман çине!

Пир тĕртекенрен – министра çити

1974 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче пĕр кĕтмен çĕртен пурнăçран уйрăлнă вăл. Сывлăхĕ пирки нихăçан та ÿпкелешменскер. 64 çул тултариччен пĕр уйăх пурăнса çитеймен хĕрарăм. Мускав тăрăх сас-хура сарăлнă – культура министрĕ хăй çине алă хунă. Çывăх çыннисем ку версие шарт та март хирĕçленĕ. Чăн та, çемйине питех ĕненсех кайман – Екатерина Алексеевна маларах та хăйĕн юн тымарĕсене касса янă.

Йăлтах – амăшĕнчен

Екатерина Фурцева Тверь кĕпĕрнинче çуралнă. Ашшĕ тĕнче пĕрремĕш вăрçинчен таврăнайман. Çакă хĕрачан чунне ĕмĕрлĕхех амантса хăварнă, пĕчченлĕх – хÿтлĕхсĕр – юлассинчен питĕ хăрама пуçланă вăл.

Амăшĕ текех качча тухман, ывăлĕпе хĕрне пĕччене ÿстернĕ. Хĕрарăм хутла пĕлмен, анчах та ăна тăван тăрăхра питĕ хисепленĕ. Ыйтусене хăй тĕллĕн татса парасси тата вăйлă характер хĕрне шăпах амăшĕнчен куçнă.

Шкулта çичĕ класс вĕреннĕ хыççăн хĕр рабфака çул тытнă. Ун хыççăн фабрикăра пир тĕртекенре тăрăшнă. Вунпилĕк çулта алла илнĕ специальноç культура министрĕ çумне яланлăхах çыпçнă: "пир тĕртекен". Хĕр пурнăçне комсомол улăштарнă.

Хальхи Курск облаçĕнчи Коренев районĕнче Фурцева вунултă уйăх комсомолăн районти уйрăмĕн секретарĕнче ĕçленĕ. Çакăн хыççăн ăна çÿлерех куçарнă. Таврапĕлÿçĕсем Фурцева пурнăçĕнчи тепĕр вăрттăнлăха уçнипе мухтанаççĕ: хĕр çав вăхăтра вырăнти платникпе çемье çавăрнă. Анчах та мăшăр виçĕ уйăх кăна пĕрле пурăннă. Фурцевăн пĕрремĕш упăшкин ятне вăрттăнлăхрах хăварнă.

Телей

Пултаруллă хĕре комсомолăн Феодосийăри хула комитетне ертсе пыма шаннă. Унтан вăл, хăй планер спорчĕпе кăсăкланнине пула, Сарă ту тăрăхне çитнĕ. Катя Фурцева кăнтăр хĕвелĕпе пиçсе ĕмĕрне иртерме, унтах мăшăр тупма пултарнă. Анчах çакна валли вăхăт юлман – ĕç тата спорт пĕтĕм вăя илнĕ. Тăрăшуллă хĕре кунта та асăрханă, сивĕрех çĕрелле ăсатнă. Çапла хĕр Ленинградра Аэрофлот аслă шкулĕнче вĕренме пуçланă.

Катя пĕрремĕш хут – пысăк хулара. Йĕри-тавра – çамрăксем. Пурте – формăпа. Паллах, хĕр юратса пăрахать. Паллах, летчика. Хĕре Петр Битков тыткăнлать.

Биткова Мускава куçарсан арăмĕ те ун хыççăнах çула тухать. Фурцевăна Тĕп комитетăн вĕренекен çамрăксен уйрăмне инструктора ĕçлеме илеççĕ. Кĕçех хăй те студентсен йышне лекет – Ломоносов ячĕллĕ хими технологийĕн институтĕнче ăс пухать. Анчах та вĕренÿ питех илĕртмест ăна – вăл кунта та общество ĕçĕпе ытларах кăсăкланать. Кĕçех институтăн парти комитечĕн секретарĕ пулса тăрать. Химик инженер дипломне шăпах вăрçă пуçланас умĕн илет. Специальноçпа пĕр кун та ĕçлеймест.

Вăрçă Фурцева пурнăçне инкек илсе килет. Мăшăрĕ пĕрремĕш кунах тенĕ пек тухса каять – вăрçа кăна мар, çемьерен те. Пĕрлешнĕренпе 11 çул иртсен ача пирки ĕмĕтленекен хĕрарăмăн аранах çие юлать. Анчах хăвăрт сас-хура сарăлать: ашшĕ Битков мар-мĕн. Арçын çакна чăтса ирттерейместь.

Анчах тепĕр верси те пур. Вăрçăра вăл урăх хĕрарăма тĕл пулса унпа çемье çавăрнă. Хĕрне вара каярахпа та ĕмĕр тăршшĕпех пулăшнă...

Чи йывăр çулсем

Фурцева чĕри çинчи иккĕмĕш сурана çаврăнать уйрăлу. Пĕчченлĕхрен хăраканскер аборта кайма та шухăшлать. Юрать-ха амăшĕ ÿкĕте кĕртет: "Мĕн чухлĕ кĕтрĕр те... Пĕр ачана ÿстерейместпĕр-и?"

Фурцевăна эвакуаципе Куйбышева /Самар/ куçараççĕ. Унта çуралнă хĕрачине хăйĕн хушаматне парать амăшĕ. Эвакуацире нумай пурăнмаççĕ, парти ĕçчене Мускавра кĕтеççĕ.

Хĕрĕх иккĕмĕш çул биографире ырă йĕр хăварать. Катеринăна урăх ĕç сĕнеççĕ – Фрунзе райкомĕн секретарĕ Петр Богуславский хăйĕн аппаратне чĕнсе илет. Çакăнтан пуçланать те Фурцевăн карьери. 1949 çулхи парти концерчĕ вăхăтĕнче ăна Николай Шверник Пысăк театрăн чаршавĕ хыçне чĕнсе илет – Хуçапа паллашмашкăн. Сталина килĕшет Фурцева. "Чĕрĕ Турра" текех курмасть хĕрарăм, анчах çак тĕлпулу малашлăха палăртать. 1950 çул пуçламăшĕнче Фурцева Кивĕ тÿремри çурта куçса Мускав комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ пулса тăрать.

Карьера юратăва пула çаврăнма пуçланă пуçа "урăлма" пулăшать. "Пĕрремĕшпе" "иккĕмĕш" хушшинче мĕн пулса иртнине никам та пĕлмест – кун пеккине чи çывăх юлташсене те каласа памаççĕ. Çакă кăна паллă: лару-тăру арçынна тивĕçтерет – арăм та, еркĕн те пур. Анчах та Богуславский мăшăрĕнчен уйрăлма сăмах кăна пани, ăна тытманни Фурцевăна йăлăхтарса çитерет. Темиçе уйăхранах Петр Богуславские ĕçрен те, партирен те кăлараççĕ. Хутшăнусем хăйсем тĕллĕнех вĕçленеççĕ.

"Пĕрремĕш"

1950-1954 çулсенче Фурцева Хрущевпа çывăхланать. Сталин вилсенех Фурцева пĕрремĕш секретарь пулса тăрать. Хрущева Екатерина пухусенче хутсăрах калаçнипе, йăнăшсене йышăнма хăраманнипе, "специалист" пулнипе килĕшет – Фурцева çынпа паллашнă чух яланах: "Специалист-и?" – тесе ыйтнă. Хĕрарăм професс сорсене питĕ хисепленĕ. "Специалист" унран, пир тĕртекенрен, ытларах пĕлет – çакă Фурцева чĕринех кĕрсе ларнă. Çавăнпах вăл хăйĕн командине шăпах çакăн пек çынсене йышăнма тăрăшнă.

Анчах карьера туома биографири шăпах çак йĕрке – "пир тĕртекен, ашшĕ-амăшĕ – хресченсем" тени пулăшнă. Анчах халĕ Фурцева – арçын ролĕнче. Вăййи вара тĕрлĕрен – усал сăмах та пур унта, ĕçкĕ-çикĕ те. Хĕрарăм тесе çăмăллăх кăна çук. Екатерина Алексеевна ăнăçу меслечĕсене хăвăрт алла илет, çапла майпа пĕрремĕш вырăна тухать. Богуславский вырăнне юлнăскер, хăй районăн чăн-чăн хуçи пулнине ĕнентерет.

Çапах та парти аппаратĕнче хĕрарăма карьера тума çăмăл пулман. Унта вăйлă арçын кăна ĕçлеме пултарнине пурте ĕненнĕ. Сталин çаплах каланă: "Наркомăн тискер кайăк пулмалла". Анчах хĕрарăм пулниех пулăшнă Фурцевăна.

Политбюро /ун чухне ТК Президиумĕ/ ларăвĕсен пÿлĕмĕ çумĕнче арçынсен туалечĕ кăна пулнă. Вĕсем унта черетпе çÿрене. Екатерина Алексеевнăн коридор тепĕр вĕçĕнчине чупма тивнĕ. Анчах та ларура çав вăхăтра темĕн те пулса иртме пултарнă – хĕрарăм туалетран килессе кам кĕтсе ларать? Тĕлĕнмелле те – шăпах çавна пула Фурцева парти Тĕп комитечĕн ахаль членĕнчен Президиум членĕ пулса тăнă. Сталин вилнĕ хыççăн Фурцевăн – ун чухне вăл ТК секретарĕ – должноçне кура ТК Президиумĕн пĕчĕк пухăвне хутшăнмалла пулнă. Унта вара Хрущев, Маленков, Каганович, Молотов тата ыттисем пухăннă. Юлашки виççĕшĕ Хрущева хирĕç каварлашнă. Фурцева çил ăçталла çаврăннине тÿрех сиснĕ. Мĕнле-ха капла? Сталинăн кăткă йăвине хускатнă çынна пылчăкпа тан тумалла-и? Хĕрарăм хăйĕн шухăшĕсем ăçта илсе çитересс ун чухне шухăшлама та пултарайманха. Президиумăн пысăк пайĕ Хрущева хирĕç сасăланă. Мĕнле пулăшмалла? Çак вăхăтра хĕрарăм чееллĕхне хута янă та Фурцева. Туалета каяс йÿтĕмпе вăл арçынсенчен тухма ирĕк ыйтнă. Анчах каланă çĕре мар, хăвăртрах хăйĕн пÿлĕмне васканă – "çĕнĕ революциерен" сыхласа хăварма пултаракансем патне шăнкăравлама пуçланă.

Теветкеллĕ утăм пулнă ку. Тен, провокаци кăна ку? Тен, Фурцева çумĕнчех Маленков е, калăпăр, Каганович итлесе тăрать? Анчах та каярахпа Аслă Екатерина тесе ят панă хĕрарăм темĕн те тума пултаракан генералсене ÿкĕтленĕ. Никита Сергеевича ТК пĕрремĕш секретарĕнчен кăларма памалла мар. Сăмах май, Брежнев та çаплах хăтланнă – вăл Жуков патне шăнкăравланă. Брежнев пÿлĕме таврăнсан ун патне черетпе Молотов, Каганович тата Первухин пырса ларнă, арçын ăçта çухалнипе кăсăкланнă. Брежнев çакна хăй туалетра вăрах ларнипе сăлтавланă – варĕ шĕвелнĕ имĕш...

Кĕтмен çĕртен Кремле Жуков, Игнатов тата Хрущев майлă ыттисем пырса кĕнĕ. Президиум канашлăвĕ вĕçленмен-ха. Пырса çитнисем пĕлтерĕшлĕ йышăнусене пĕчĕк ушкăнпа татса памалла маррине каланă. Хрущев çапла туххăмрах трон çине хăпарса ларнă. Фурцевăшăн ăнăçлă кунсем пуçланнă.

Хула хуçи

Екатерина Алексеевна 1954 çулхи çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче Мускав хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса тăнă. Анчах та карьерăра вăл хĕрарăм илĕртÿлĕхĕпе усă курман – майĕ пулсан та: Фурцевăна илемĕшĕн, çыпçăллă тăханнăшăн, хăйне пăхнăшăн арçынсем килĕштернĕ. Анчах Хрущев та мăшăрне улталаман. Хĕрарăмсемпе унăн ĕçлĕ хутшăнусем кăна пулнă.

Ĕçри ăнăçу çумне аранах çемье телейĕ хутшăннă – Екатерина Алексеевна хăй патĕнче ĕçлекен Николай Фирюбинпа туслашнă. Лешĕ, профессионал дипломат, хĕрарăмсене килĕшме пĕлнĕ.

Фурцевăпа иккĕшĕн туслăхĕ – пачах расна çынсем-çке – пурне те тĕлĕнтернĕ. Хĕрарăм арçынна малтан Прагăна, унтан Белграда посолра ĕçлеме куçарсан вĕçĕмех ун патне вĕçнĕ. Хăш хушăра "Ромеопа Джульеттăна" çаврăннине иккĕшĕ те сиссе те юлайман.

Фирюбин Мускава таврăнса ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн çумĕнче ĕçлеме пуçласан мăшăрланнă вĕсем. Фурцева хăй мĕн тери йăнăшнине ытла кая юлса ăнланса илнĕ.

Хрущев пархатарлă çын пулнă – 1957 çулхи çĕртмен 29-мĕшĕнче Фурцевăна ТК Президиумне кĕртнĕ. Анчах çакă арçынсенчен нумайăшне килĕшмен...

Матриархат, патриархат, секретариат

1960-мĕш çулсем... Хрущев политики нумайăшне тивĕçтермен. Çав шутра – Фурцевăна та. Пĕррехинче Екатерина Алексеевна çакăн пирки ТК членĕпе Аристовпа телефонпа калаçнă. Калаçу стенограмми тепĕр ирхинех Хрущев сĕтелĕ çинче выртнă. Никита Сергеевич нумай шухăшласа тăман, черетлĕ пленумрах Фурцевăна секретарьтен кăларнине пĕлтернĕ.

Екатерина Алексеевна килне таврăнсанах алă çинчи юн тымарĕсене касса янă. Ку та пулăшман çăлăнса юлма – Хрущев çакна "хĕрарăм климаксĕпе" кăна çыхăнтарнă. Е.А. ăнланса илнĕ – арçынсен ушкăнĕнче текех хĕрарăм вăййине йышăнмаççĕ... Уйăхран йышăну тухнă – Фурцева малашне культура министрĕ пулĕ. Çулталăкран Екатерина Алексеевнăна президиума та кĕртмен...

Культура ведомствин тилхепине те тăршсах туртса пынă хĕрарăм. Карьерине пачах пĕтерсе хурассинчен хăрамасăрах артистсене ют çĕршывсене гастрольсене çÿреме майсем туса панă. Фурцева тăрăшнипех Таганкăра – театр, Лужники районĕнче спорт комплексĕ, хореографи çĕнĕ училищи çĕкленнĕ. Анчах та кĕçех сас-хура сарăлнă – Фурцевăна министртан кăлараççĕ.

Пĕрин çумне тепри хушăнса пынăтăр... Хĕрĕ дача ыйтнă. Малтанах килĕшмен амăшĕ каярахпа тăрăшсах çурт çĕклеме пикеннĕ. Ведомствăна пăхăнса тăракан организацисенчен пулăшу ыйтнă та – лешсем хавасах килĕшнĕ. Анчах çакăн пирки хыпар "çÿле" çитнĕ. Тĕрĕслев пуçланнă. Çак вăхăталла Фурцева икĕ çул ĕнтĕ пĕчченех пурăннă. Ун патĕнче хăнасем те пулман. Фирюбинăн айккинче такам пуррине Фурцева пĕлнĕ.

Юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнчи инкеке икĕ сăлтавпа çыхăнтараççĕ. Çак кун Фурцевăна пенси кĕтнине пĕлтернĕ. Çак кунах Николай Фирюбин арăмне хăй унран официаллă майпах уйрăлассине каланă. Çурçĕр иртсен Николай Павлович Светлана патне шăнкăравланă: "Аннÿ текех çук".

Маларах Екатерина Фурцева тантăшне: "Хăть мĕн калаччăр та – эпĕ пурпĕр министр пулсах вилетĕп", – тенĕ.

Çаплах пулса тухнă та.

/"ЖЗЛ"/.

Саламлатпăр

Юратнă аннене, кукамая, асаннене – Патăрьел районĕнчи Кĕçĕн Чемен ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Патăрьелĕнче пурăнакан Фекла Николаевна ИВАНОВĂНА – сумлă юбилейпе, 85 çул тултарнă ятпа, чунчĕререн тухакан ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тĕнчери мĕн пур ырлăха сунатпăр сана, хаклă çыннăмăр. Çăлкуç шывĕ пек иксĕлми телей, çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Ĕмĕр-ĕмĕр ачусен тата мăнукусен пархатарне курмалла пултăр.

Эс пуртан тăван кил ăшши
Пире чĕнет йыхрав ярса.
Аннемĕр, пурăн ĕмĕр сывă
Пире тĕрек çунат парса.

Хĕрĕсем, ывăлĕсем, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, мăнукĕсен ачисем, тăванĕсем.

АСĂНУ

Тавах, ял-йышăм

Çĕр çине никам та яланлăха килмест... Тин кăна пур тăван-пĕтен юнашарччĕ, майĕпенех чакса-чакса пычĕ йыш... Акă пиччене, Элĕк районĕнчи Шураç ялĕнче пурăннă Николай Максимова, хĕрĕх кун каялла юлашки çула ăсатрăмăр...

Ял-ялĕпе халăх тĕрлĕрен теççĕ. Эпĕ вара ентешĕмсене пуçăма çĕре çити тайса тав тăватăп – инкекре пăрахманшăн, пурте пĕр çын пек пулса пулăшнăшăн. Тăван ялăмран вĕçсе тухса кайнăранпа вăхăт нумай иртрĕ. Çунат сарма пулăшнă килĕм-çуртăм хупăнчĕ. Тавах ял-йышăма – çывăх çыннăмсене пĕрин хыççăн теприне юлашки çула чыслăн ăсатма пулăшнăшăн.

Пиччем, çемьепе пурăнма, хуçалăха çĕнĕрен аталантарма ĕмĕтленнĕ пиччем, юлашки кунĕсене тăван ялтах ирттерчĕ. Ахальтен каламаççĕ "лайăх кӳршĕ тăванран та çывăхрах" тесе. Эпир алă çитерейменнине кӳршĕ-аршă çитерчĕ. Чĕрĕ чух та вĕсен тĕрекĕпе сывларĕ тăванăм, юлашки çула пуçтарăнсан каллех ял-йышăм туслăн чăмăртанчĕ.

Тавах, хисеплĕ ял-йышăм, тăванăмсене сума сунăшăн. Тайма пуç сире. Ырă кăмăлăра нихăçан та манас çук. Айăп ан тăвăр.

Максимовсен ячĕпе –
Маргарита Ильина хăйĕн çемйипе.

☺ И-ХИ-ХИК ☺

Турагентствăра телефон шăнкăртатать.

– Алло! Эсир Египета тур сутатăр-и?

– Паллах.

– Калăр-ха, мĕнле курортсем пур унта?

– Шарм-эль-шейх, Хургада, Таба, Нувейба...

– Вăт-вăт, Нувейба, шăпах Нувейба!

– Эсир хăçан каясшăн унта?

– Мĕн? А, эпир каясшăн мар-ха, эпир кроссворд шутлатпăр. Нувейба шăпах вырнаçать...

* * *

Египет. Бедуин хĕрсех кавир шаккать. Ун патне вырăс турисчĕ пырать:

– Мĕн, тапранмасть-им?

* * *

Паллă çулçӳревçе пĕрисем хăнана чĕннĕ.

– Юлашки виçĕ çул эпĕ çынçиенсен хушшинче пурăнтăм, – каласа кăтартать хайхи.

– Эх, мур, пĕлмен, – пĕççине шарт çапать кил хуçи арăмĕ. – Эпĕ вара така какайĕ ăшаларăм.

* * *

Интурист умĕнче ют çĕршывран килнĕ турист пикерен ыйтать:

– Эсир акăлчанла калаçатăр-и?

– Кăштах.

– Мĕн чухлĕ?

– Икçĕр доллар.

РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

СУТАТĂП ПРОДАЮ

2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ, щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. 8-967-470-46-77.**

4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

5.Блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит, чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

8.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

10.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

11.Срубы для бани. Т. 37-28-74.

15. Кирпич любой. Т. 89613393363.

17. Песок, гравмассу, керамзит, чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

21.Керамблоки, гравмассу, песок. Т.: 89033456307, 89176757528.

22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

23.Гравмассу, песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

26.КЕРАМБЛОКИ /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

29.Картофелекопалки, косилки, грабли, пресс-подборщики, **погрузчики,** доильные аппараты. РАСПРОДАЖА! ДОСТАВКА! Т.: 89373758095, 89379559802.

30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

31.Гравмассу, песок, керамзит, кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

37.Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

48.Керамблоки, бой кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

65.Песок, гравмассу, бой кирпича, **щебень** известк-й, чернозём. Т.: 89196567752, 89093005705.

66.Гравмассу, песок, бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

74.КЕРАМБЛОКИ вибропрессованные, пропаренные. **Все размеры. Доставка.** Т. 89176776846.

123.Гравмассу, песок, навоз. Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг. Т. 89033220479.

172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку. Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 8-903-322-04-79.

180.Комбикорм, зерно, отруби, муку горох-ю. Д-ка. Т. 89373916016.

183.Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

205.Цемент, песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

295.Песок, ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит. Д-ка. Т. 89033220479.

361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77.**

364.Пластиковые ОКНА, ДВЕРИ. Замер – бесплатно. Пенсионерам – скидки. Т. 89278447811.

464.Гравмассу, песок, щебень, чернозём. Д-ка. Т. 89603098191.

465.Гравмассу, песок, щебень, чернозём. Д-ка. Т. 89093054261.

501.Гравмассу, песок строительный, **щебень.** Т. 89520269954.

514.БЛОКИ керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **цемент** в ассортименте. Т.: 8-927-668-94-54, 8-927-667-26-04.

546.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку, **бордюры, водостоки.** Доставка, укладка. Т. 89033582042.

561.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 8-917-677-66-55.

569.2-комнатную квартиру-распашонку в Чебоксарах в Садовом. Цена договорная. Т. 8-917-662-64-21.

ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

39.Коров, бычков и лошадей. Т. 8-960-310-98-78.

109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

562.Коров, бычков, лошадей. Т. 8-961-345-05-28.

563.Бычков, телок, коров и лошадей. Т. 8-967-794-92-82.

ПУЛĂШУ УСЛУГИ

38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ. Т. 8-961-342-90-59.

45.Лечение алкоголизма, табакокурения. Т.: 89030662902, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

51.Бурение колодцев, скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

90.Бурение скважин на воду "под ключ". **Т. 8-987-576-65-62.**

152.Бурение скважин на воду. Т. 8-960-302-12-93.

171.Кровельные, фасадные работы. Т. 8-903-322-04-79.

246.Бурение скважин на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

547.ЗАБОРЫ /профнастил, сетка-рабица, ж/б, кованые/, **ворота, калитки.** Сварочные работы. Т.: 89033582042, 44-20-42.

ĔÇ РАБОТА

297.Требуются каменщики, монолитчики в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

499.Для работы в Москве и Московской **области** требуются рабочие следующих специальностей: плотники, штукатуры, маляры, столяры, ламинатчики, плиточники, подсобные рабочие с зарплатой от 50 тысяч рублей. Контактный телефон 89637709962 Алексей.

568.СРОЧНО требуется помощница по хозяйству в Московскую область. Умение доить обязательно. З/п 25 тыс. руб. Тел. 8-905-561-91-48.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 31.07.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7892. Заказ 2918.